24-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 8 КĔҪНЕРНИКУН 6(6031) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

Выльăх апатне тирпейлĕн тыткалар

Пирĕн республикăри колхозсем 1942 ҫула выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫре ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тунипе кĕчĕҫ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ чылай ӳсрĕ, унăн продуктивноҫĕ те хăпарчĕ. Партипе правительство выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстернĕшĕн тата унăн продуктивноҫне хăпартнăшăн ĕҫшĕн хушса тӳлемелле йĕрке туни колхозниксемпе колхозницăсене ҫак ĕҫе тимлĕн тума хавхалантарчĕ. Нумай колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес плана ытлашшипех тултарчĕҫ, фермăсенче ĕҫлекенсем выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноҫне нумай ӳстерчĕҫ. Сĕнтĕр районĕнчи 62 колхозри сурăх фермисем путексем ӳстерес тĕлĕшпе 1941 ҫулти плана ирттерсе тултарнă, 28 ферма ĕнесенчен сĕт суса илес плана ытлашшипех тултарнă. Кун пек тĕслĕхсем кашни районрах нумай курма пулать.

Выльăх-чĕрлĕх йышĕ тата продуктивноҫĕ ҫулран ҫул пысăккăн ӳссе пырасси чи малтан выльăх апатне ҫителĕклĕ хатĕрлениинчен тата ăна типтерлĕ тыткаласа усă курниинчен килет. Выльăх апачĕн кашни килограмне шута илсе усă курмалла. Ҫак ĕҫе лайăх организацилесе республикăри нумай колхозсем 1941 ҫулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана ăнăҫлăн тултарчĕҫ. Малта пыракан колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫри паллă колхозниксем выльăхсем валли апат нумайрах хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕҫлерĕҫ. Халĕ выльăхсене рацион тăрăх апат параҫҫĕ, ăна тирпейлĕн тыткаласа ҫитереҫҫĕ. Советски районри «Сеятель» колхозăн ферма заведующийĕ скотниксене выльăх апатне кашни эрнере акт тăрăх парса тăрать. Ҫапла тунипе вĕсем выльăх апачĕн кашни пĕрчине шута илсе тăраҫҫĕ.

Вăрмар районĕнчи малта пыракан колхозсем 1942 ҫулта выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес, унăн продуктивноҫне хăпартас ĕҫшĕн кĕрешме иртнĕ ҫулхи кĕркуннех тытăннă. Вĕсем колхозăн обществăллă выльăхĕсем валли тĕрлĕ апат ҫителĕклĕ хатĕрленĕ. «Красная Кубня» колхоз обществăллă выльăхсем валли 1190 центнер улăх ути, пин центнер силос, «Арабось» колхоз 1470 центнер утă, 1500 центнер силос хатĕрлесе хунă. Кунсăр пуҫне выльăхсем валли ҫĕрулми, кăшман, арпа, ҫуртри улăмĕсем нумай уйăрса хунă. Чкаловски районри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 170 тонна силос, 40 лав ҫулҫăллă апат хатĕрленĕ.

Ишлей районĕнчи «Пархикасси» колхоз фермисенче выльăхсене ятарласа тунă рацион тăрăх апат параҫҫĕ. Рациона улăм-утăсăр пуҫне ҫĕрулми, выльăх кăшманĕ тата ыттисем те кĕреҫҫĕ. Фермăра выльăхсене апат пĕҫерсе хатĕрлесе пама ятарласа кухня организациленĕ. Кунта выльăхсене пахча-ҫимĕҫе пĕҫерсе, улăма тураса, вĕри шывра пиҫĕхтерсе параҫҫĕ, ҫăнăх шывĕсем туса параҫҫĕ. Паллах, ҫапла пур апатпа та йĕркеллĕн усă курса тăрантарсан, выльăхсен продуктивноҫĕ те хăпарать, апат та тирпейлĕн расходланать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия», «Наркомюст», «Сĕнтĕрпуҫ» колхозсенче хĕл каҫаччен выльăх апачĕсене расходламалли план тунă. Выльăхсен витисене пурне те юсаса ăшăтнă. Выльăх апатне уйăрса парас ĕҫе ку колхозсенче ферма заведующийĕсем хăйсем туса пыраҫҫĕ. «Малалла», «Коминтерн» колхозсем выльăхсене ҫĕрулмине ҫуса пĕҫерсе пама ҫуртсем туса лартнă.

Халĕ, ҫĕршыв вăрҫă кунĕсенче пурăннă вăхăтра, выльăх апачĕсене уйрăмах упраса расходламалла. Ҫакă вăл пирĕн колхозсем Хĕрлĕ Ҫара ял-хуҫалăх продукчĕсем ҫеҫ мар, выльăх апатне те нумай парса пулăшма кирлĕ пулнинчен тухса тăрать. Выльăх-чĕрлĕхе ҫуллаччен лайăх пăхса усрасси кашни колхоз умĕнчи пысăк тата ответлă задача пулса тăрать. Выльăх апачĕн кашни килограмне шута илсе, ăна тăккаламасăр расходламалла. Пĕр пĕрчĕ апат та ан тăкăнтăр, аякка ан кайтăр, — ҫакăншăн кĕрешмелле халĕ фермăсенче ĕҫлекен кашни работникăн, работницăн.

Анчах ҫакна республикăри пур колхозсенче те мар тăрăнăн ăнланса илнĕ-ха. Хăшпĕр колхозсенче выльăх апатне вĕҫĕмсĕр тăккаласа тытаҫҫĕ. Советски районри «Ударник» колхоз выльăхсене утă-улăма килкартинче юр ҫине пăрахса ҫитерет. Кунта апата йĕркесĕр тăккалаҫҫĕ. Выльăх ҫиес улăм ытларах ура айĕнче таптанса сая каять.

«Правда», «Красный Волгарь», «Осоавиахим» колхозсем (Сĕнтĕрвăрри р.) выльăхсене хĕл каҫарма ҫителĕклĕн хатĕрленмен. Кунта витесене ăшăтман, выльăх апатне унта-кунта пăрахса ҫитереҫҫĕ. Утă расходласси плансăр, виҫесĕр пулса пырать.

Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем колхозăн обществăллă фермисенче выльăх-чĕрлĕхе тăрантарас пирки нимĕн те тумаҫҫĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Осоавиахим», «Искра», «Верный путь» колхозсенче лайăх пăхса усраман пирки ҫамрăк выльăхсем вилнĕ фактсем те пулнă.

Ҫакăн пек ҫитменлĕхсене халех пĕтерес пулать. Колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхне лайăх пăхса усрассишĕн, вĕсен продуктивноҫне хăпартассишĕн кашни колхозăн, колхозникпа колхозницăн тăрăшса ĕҫлес пулать.

1942 ҫулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн продуктивноҫне татах та хăпартас ĕҫре выльăх апачĕсемпе типтерлĕн, тăккаламасăр усă курни ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тума пулăшĕ. Хĕрлĕ Ҫарпа тăван ҫĕршыв валли татах нумайрах аш-какай, сĕт-ҫу, чĕртавар парса пулăшма май парĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 6-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Январĕн 6-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем малалла куҫса пырса, халăх пурăнакан темиҫе пункта йышăнса илнĕ. Ҫапăҫу пынă чухне нимĕҫ войскисен чĕрĕ вăйĕпе техникине питех те пысăк ҫухатусем кӳнĕ.

Январĕн 5-мĕшĕнче нимĕҫсенне 14 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 6-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕҫсенне 2 самолет персе антарнă.

Пирĕн Баренц тинĕсĕ ҫинчи карапсем противникăн икĕ транспортне тата пĕр сторожевой карапне путарнă.

* * *

Январĕн 5-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаҫĕсем нимĕҫсен 13 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 780 ытла автомашинине, 13 орудине прислугисемпе пĕрлех, боеприпассем тиенĕ 320 лавне ытла пĕтерсе тăкнă, чугунҫул ҫинчи кĕпере сиенленĕ, чылай вырăнсенчи чугунҫул линисене аркатса тăкнă, чугунҫул ҫинчи темиҫе эшелона вут тивертсе янă тата противникăн пехотине 5 батальона ҫити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Латышев юлташăн чаҫĕ (Хĕвеланăҫ фрончĕ) халăх пурăнакан Л. пункта тытса илессишĕн противника хирĕҫ икĕ кун хушши хаяррăн ҫапăҫнă. Атакăна кайса, пирĕн боецсем Л. пункта тытса илнĕ, нимĕҫсене пысăк ҫухатусем тӳстернĕ. Ҫапăҫу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 700 ҫын ытла вилсе юлнă. Инҫете перекен оруди, танка хирĕҫ пемелли 30 оруди, 4 миномет, 12 станковăй пулемет, 12 автомат тата ытти хĕҫпăшалсемпе боеприпассем те тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăҫ фронтĕнчи участоксенчен пĕринче ҫапăҫакан Гордов юлташăн боецĕсем, противника хирĕҫ хаяррăн кĕрешсе, чугунҫул ҫинчи станцăна йышăнса илнĕ тата нимĕҫсенне 19 оруди, бронемашина, 25 автомашина тата пулеметсемпе автоматсем тытса илнĕ.

* * *

Кĕҫĕн лейтенант Ханджетский юлташ командир пулса ертсе пыракан 4 красноармеец-автоматчик нимĕҫсен каялла чакса пыракан чаҫĕ вырнаҫнă С. ялне сасартăк пырса тапăннă. Тăватă енчен персе тăнă паттăр боецсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 90 ҫынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Головаково ялĕнче (Мускав облаҫĕ) гитлеровецсем Петр Зуйков хресчене тискеррăн асаплантарса вĕлернĕ. Бандитсем Зуйковăн питне, кăкăрне, аллисене касса илнĕ, куҫне чиксе шăтарнă, ҫакăн хыҫҫăн унăн пуҫне ломпа ҫапса ҫĕмĕрнĕ.

* * *

Германире продовольстви енĕпе пурнăҫ кунран кунах начарланса пырать. Чылай хуласенче, вăл шутрах Гамбургра та, январь уйăхĕнчи продовольстви карточкисене ку таранах ҫитсе те памаҫҫĕ. Выҫăпа аптăраса ҫитнĕ хула халăхĕ апат-ҫимĕҫ продукчĕпе сутă тăвакан магазинсемпе складсем патĕнче кунĕ-кунĕпех черетре кĕтсе тăрать. Январĕн 2-мĕшĕнче Гамбургри выҫă хĕрарăмсен ушкăнĕ виҫĕ магазина аркатса тăкнă. Ҫав вăхăтра вĕсем икĕ полицейскине йывăр амантнă.

* * *

Уралри машиностроительнăй заводсенчен пĕринче икĕ корпуса туса хатĕрлесе ҫитернĕ, вĕсен лаптăкĕ 10.000 квадратлă метр пулать. Строительствăна вырăнти халăх пысăк пулăшу парса тăнă. Строительство площадкинче служащисемпе рабочисем, студентсемпе килхуҫи хĕрарăмĕсем пиншер ҫын ĕҫленĕ. Корпуссене 12 кун хушшинче туса ҫитернĕ. Корпуссене туса пĕтернĕ хыҫҫăн строительсем нумайĕшĕ оборудовани монтажне тунă ҫĕрте ĕҫлеме килĕшнĕ.

* * *

Германи халăхне лăплантарас тесе, нимĕҫсен ҫарĕн командованийĕ фашистла авиацин «ҫĕнтерĕвĕсем» ҫинчен татах тепĕр суя пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Декабрĕн 27-мĕшпе январĕн 2-мĕш хушшинче нимĕҫсем пирĕн 98 самолета персе антарнă имĕш, хăйсен вара мĕнпурĕ те 12 самолет ҫеҫ пĕтнĕ пулать.

Ҫак вĕсне ҫитиех суя тата кулăшла даннăйсене гитлеровецсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕҫсен фашистла войскисем тӳсекен ăнăҫсăрлăхсене мĕн чухлĕ те пулин витсе хурас тесе шухăшласа кăларнă. Чăннипе илсен, ҫав вăхăт хушшинче нимĕҫсен авиацийĕн 110 самолет пĕтнĕ. Совет авиацийĕ ҫав вăхăтра 25 самолет ҫухатнă.

Январĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух ҫĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕҫ пур фронтсенче те ҫапăҫнă.

* * *

Пирĕн часть (Хĕвеланăҫ фрончĕ), противника хирĕҫ хаяррăн ҫапăҫса, чугунҫул станцине йышăннă тата нимĕҫсенне 200 ытла вагон, 3 паровоз, 1500 яхăн авиабомба, питех те нумай патронсем тытса илнĕ, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 ҫынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче кĕрешекен летчиксем, тăшман ҫине ăнăҫлăн вĕҫсе пырса штурмласа, нимĕҫсен 3 ангарне тата авиамастерскойне вут тивертнĕ, нимĕҫсенне 5 оруди пĕтерсе тăкнă, чугунҫул ҫинчи 40 вагона ҫапса аркатнă тата нимĕҫсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 ҫынна ҫити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сахаров политрука нимĕҫсен автоматчикĕсем ҫавăрса илнĕ пулнă. Нимĕҫсене хирĕҫ ҫапăҫăва кĕрсе, Сахаров фашистсен 8 салтакне тата пĕр офицерне пĕтерсе тăкнă. Ыттисем паникăна ӳксе тарса пĕтнĕ. Унччен малтанхи ҫапăҫусенче Сахаров юлташ нимĕҫсен салтакĕсемпе офицерĕсене 18 ҫынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Н-ски госпитале Донбасс шахтерĕсен партизанла отрячĕн командирне Б. юлташа, фашистла захватчиксене хирĕҫ ҫапăҫса аманнăскере, илсе пынă. Б. юлташăн дневникĕнчен уйрăм сыпăксене, партизанла отрядăн чи пысăк операцийĕсем ҫинчен калакан вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«Ноябрĕн 25-мĕш. М. хулинчи театр ҫуртĕнче нимĕҫсен 115 штурмовикĕ каҫ выртма вырнаҫни ҫинчен пирĕн разведка пĕлтерчĕ. Ҫĕрле партизансем хулана пырса кĕчĕҫ те театр ҫуртне ҫавăрса илчĕҫ, фашистсен ӳсĕр бандине пурне те пĕр ҫын юлмиччен вĕлерсе пĕтерчĕҫ. Хуларан тухса кайнă чухне партизансем нимĕҫсен комендантне персе пăрахнă.

Ноябрĕн 29-мĕш. М. хулинчен 9 километрта партизансем чугунҫула салатса тăкнă тата фашистсен 12 салтакĕпе 6 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

Декабрĕн 1-мĕш. Ирхине 3 сехетре нимĕҫсенне горючи тултарнă 12 цистернăна взрыв туса сирпĕнтертĕмĕр. Нимĕҫсен 16 салтакран тăракан хуралне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрăмăр.

Декабрĕн 5-мĕш. С. пунктĕнчи аэродром ҫине фашистсен разведка тăвакан икĕ самолечĕ каҫхине 6 сехетре анса ларни ҫинчен сведенисем илтĕмĕр. Шанчăклă ҫынсем аэродром ҫинче нимĕнле хĕҫпăшаллă хурал та ҫукки ҫинчен пĕлтерчĕҫ. Фашистсене машинăсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкма боецсен пĕр группине ятăмăр. Тăшман ҫине кĕтмен ҫĕртен пырса тапăнас тесе, чее меслетпе усă куртăмăр. Партизансем пичке лартнă лав илчĕҫ те, самолетсем патне горючи турттарса пынă пек туса, аэродром ҫине пĕр чăрмавсăр пырса кĕчĕҫ. Партизансем летчиксене вĕлерчĕҫ, самолетсене ҫунтарса ячĕҫ, хăйсемпе пĕрле инструментсемпе картăсем илсе тухрĕҫ.

Декабрĕн 7-мĕш. Г. ялĕнче нимĕҫсем ĕҫкĕ пуҫлани ҫинчен пире пĕлтерчĕҫ. Эпир хамăра чĕнсе илессе кĕтсе тăмарăмăр — ҫĕрле унта хамăрах пырса ҫитрĕмĕр. Фашистсем ҫав вăхăталла пурте ĕҫсе супнă пулнă, эпир вĕсем валли тип мунча турăмăр. Ҫав каҫхине 126 фашиста, вăл шутра 3 офицера, вĕлерсе пĕтертĕмĕр. Эпир 10 автомат тата боеприпассем нумай тытса илтĕмĕр.

Декабрĕн 12-мĕш. Ҫĕрле Я. станцийĕ ҫине пырса тапăнтăмăр. Кунта нимĕҫсен ҫар эшелонĕ тăнă пулнă. 96 фашиста пĕтерсе тăкрăмăр, горючи тултарнă 2 цистернăна взрыв туса сирпĕнтертĕмĕр тата 14 пулемет тытса илтĕмĕр.

Декабрĕн 15-мĕш. П. ялне фашистсен отрячĕ пырса ҫитнĕ пулнă. Фашистсем ялти ҫынсене пĕтĕмпех ҫаратма тытăннă. Ҫав яла ҫĕрле эпир пырса кĕтĕмĕр, часовойсене пĕтерсе тăкса, 30 нимĕҫе ытла пере-пере вĕлертĕмĕр.

Декабрĕн 24-мĕш. И. шахтинче динамит складне взрыв туса сирпĕнтертĕмĕр.

Декабрĕн 25-мĕш. Ч. шахтинче 170 ещĕк патрон взрыв туса сирпĕнтертĕмĕр. Склада хуралласа тăнă 7 салтака пĕтерсе тăкрăмăр».

* * *

Нимĕҫсен фашистла тискер кайăкĕсем Хĕрлĕ Ҫарăн тыткăна лекнĕ боецĕсемпе командирĕсене ҫавтери тискеррĕн мăшкăлласа асаплантараҫҫĕ, вĕсене выҫтарса вĕлереҫҫĕ. Нимĕҫсен 34-мĕш пехотнăй дивизийĕн 88-мĕш полкĕн штабĕ кăларнă 202-мĕш №-лĕ приказра, пирĕн чаҫсем тытса илнĕскерте, ҫапла каланă: «Стройран тухнă лашасене пурне те ятарласа тунă пунктсене илсе каймалла. Лаша виллисем вырăссен тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннисемшĕн апат вырăнне пулĕҫ. Ҫавăн пек пунктсене уйрăм паллăсемпе кăтартса памалла. Ҫавнашкал пунктсем Мало-Ярославецра шоссе ҫулĕ хĕрринче тата Романовăпа Белорусово ялĕсенче пур». Ҫав полк штабĕн тепĕр приказĕнче, «Обмундировани тĕлĕшпе ĕҫ мĕнле тăни ҫинчен» тесе ят панăскерĕнче, «вырăссен тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннисенчен урана тăхăнмалли япаласене пĕр шухăшласа тămасăр хывса илме» хушнă.

* * *

Вилнĕ нимĕҫ офицерĕ Эвальд Хейдер ҫумĕнче Герта Заммель Тильзитран янă ҫырăва тупнă, ҫав ҫырура ҫапла каланă: «Российăн тӳрем ҫĕҫенхирĕсенче нимĕҫсен питех те нумай салтакĕсен пурнăҫĕсем таталчĕҫ. Вĕсем хушшинче пирĕншĕн питех те ҫывăх ҫынсем те пур. Пирĕн урамри кашни ҫуртра пекех камшăн та пулин хурланса макăраҫҫĕ».

* * *

Декабрĕн юлашки кунĕсенче Германире нимĕҫ ҫарĕ валли ăшă япаласем пухасси ҫинчен пĕлтернĕччĕ, халĕ ҫав ĕҫ пачах та путланса ларнă. Ăшă япаласем пухмалли срока тата тепĕр икĕ эрнене тăсасси ҫинчен халĕ Берлинра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Штурмовиксен отрячĕсем хулара талккишĕпех ухтарса ҫӳреҫҫĕ, халăхран мĕнпур ăшă япаласене пĕтĕмпех пуҫтарса каяҫҫĕ. Полиципе штурмовиксем арҫынсемпе хĕрарăмсем ҫинчи юлашки ăшă кĕпе-йĕмсене, носкисемпе фуфайкăсене, перчаткăсемпе ҫĕлĕксене ирĕксĕрлесе хывтараҫҫĕ.

* * *

Берлинри радио январĕн 6-мĕшĕнче черетлĕ суя пĕлтерӳ панă. Ҫав пĕлтерӳре каланă тăрăх, нимĕҫсен бомбардировщикĕсем январĕн 4-мĕшĕнче Мускав ҫине вĕҫсе пырса тапăннă пулать тата «телеграфăн главкăй ҫуртĕпе пĕр казарма ҫине темиҫе бомба тӳрĕ лекнине палăртнă» пулать. Анчах телеграфа нимĕнле бомбăсем те лекменнине кашни москвич хăйĕн куҫĕпе курса ĕненме пултарать. Ҫавăн пекех Мускавра пĕр казарма та сиен курман. Фашистсен авиацийĕ Мускав ҫине ăнăҫлăн вĕҫсе пырса тапăннă тесе ҫавăн пек ухмахла халлапсем шухăшласа кăларма лекет пулсан, вара гитлерла элекҫĕсемпе ултавҫăсен ĕҫĕсем питех те начар пулас.

Греци королĕ Георг II ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталина ҫĕнĕ ҫул ячĕпе сывлăх сунса саламлани

СИРĔН ГЕРОЙЛА ВОЙСКĂСЕН МУХТАВЛĂ ҪĔНТЕРӲСЕМ ӲССЕ ПЫНĂ МАЙПА СИРЕ ПĔТĔМ ЧĔРЕРЕН ЫРĂ СЫВЛĂХ СУНСА САЛАМЛАНИНЕ ТАТА СОЮЗНИКСЕН ĔҪЕ ҪĔНĔ ҪУЛТА ҪĔНТЕРӲ ТУТĂР ТЕСЕ ХĔРӲЛЛĔН СУННИНЕ ЙЫШĂНМА ЫЙТАТĂП.

ГЕОРГ II.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ И. В. Сталин Греци королĕн Георг II саламлă телеграмми ҫине панă ответ

ХĔРЛĔ ҪАР НИМĔҪ ЗАХВАТЧИКĔСЕНЕ ХИРĔҪ ҪАПĂҪСА ҪĔНТЕРӲСЕМ ТУНĂ МАЙПА ЭСИР ЧĔРЕРЕН ЫРĂ СУНСА САЛАМЛАНĂШĂН СИРЕ ХĔРӲЛЛĔН ТАВ ТУНИНЕ ЙЫШĂНМА ЫЙТАТĂП. ХАМĂРĂН ПĔТĔМĔШЛĔ ТĂШМАНА ТАТĂКЛĂНАХ ҪАПСА ҪĔМĔРЕССИНЕ ТАТА НИКАМА ПĂХĂНМАН ГРЕЦИЯ ҪĔНĔРЕН ҪУРАЛСА УРА ҪИНЕ ТĂРАССИНЕ ШАНСАХ ТĂРАТĂП.

И. СТАЛИН.

Генерал де-Голль ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательне И. В. Сталина ҫĕнĕ ҫул ячĕпе сывлăх сунса саламлани

ҪĔНĔ ҪУЛ ҪИТНĔ МАЙ СИРЕ ХАМĂН ЯТПА ТАТА ФРАНЦИ ЯЧĔПЕ СОВЕТ ҪАРĔСЕМПЕ СОВЕТ ХАЛĂХНЕ КĔРЕШӲРЕ АНĂҪУ СУННИНЕ ЙЫШĂНМА ЫЙТАТĂП. СОВЕТ ХАЛĂХĔН ПАТТĂРЛĂХĔ НИМĔҪСЕНЕ НИКАМ ҪĔНТЕРЕЙМЕННИ ҪИНЧЕН КАЛАКАН ЮМАХА СИРСЕ ЯЧĔ ТАТА ПУСМĂРТИ ХАЛĂХСЕН ЧĔРИСЕНЕ ШАНЧĂК ПАРСА ХАВХАЛАНТАРЧĔ. 1942 ҪУЛ ВЫРĂС ҪĔРШЫВНЕ, ИРСĔР МĂШКĂЛСЕМ ТӲСНĔСКЕРЕ, ИРĔКЕ КĂЛАРМАЛЛИ ҪУЛ ПУЛСА ТĂРĔ, МĔНПУР СОЮЗЛĂ ХАЛĂХСЕНЕ ВĂЛ ҪĔНТЕРӲ ПАТНЕ, ИРСĔР ТĂШМАНА, ХĂЙĔН ВАРВАРЛА ĔҪĔСЕМПЕ ЭТЕМЛĔХЕ НАМĂСА ЯРАКАНСКЕРЕ, ҪĔНТЕРСЕ ТĔП ТĂВАССИ ПАТНЕ ИЛСЕ ҪИТЕРĔ.

ГЕНЕРАЛ ДЕ-ГОЛЛЬ.

Де-Голль генералăн саламлă телеграмми ҫине ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ И. В. Сталин панă ответ

ГОСПОДИН ГЕНЕРАЛ, ЭСИР ҪĔНĔ ҪУЛ ЯЧĔПЕ ЧĔРЕРЕН САЛАМЛАНИШĔН СИРЕ ТАВ ТĂВАТĂП. СИРЕ, ГЕРМАНИПЕ ИТАЛИ ПУСМĂРҪИСЕНЕ ХИРĔҪ, ИРĔКЛĔ ТЕ НИКАМА ПĂХĂНМАН ФРАНЦИШĔН КĔРЕШЕКЕН СИРĔН ВОЙСКĂСЕНЕ ТАТА МĔНПУР ИРĔКЛĔ ФРАНЦУЗСЕНЕ КĔРЕШӲРЕ ЧИ ПЫСĂК АНĂҪУ СУННИНЕ ЙЫШĂНĂР.

И. СТАЛИН.

Юлашки сехетре

Хĕвеланăҫ фронтĕнчи войскăсем 1942 ҫулти январĕн 1-мĕшпе 5-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Туллимар даннăйсем тăрăх, Хĕвеланăҫ фронтĕнчи войскăсем, нимĕҫ фашисчĕсене хирĕҫ ҫапăҫса, 1942 ҫулти январĕн 1-мĕшпе 5-мĕш хушшинче ҫакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—58, бронемашинăсем—28, орудисем—337, минометсем—144, танксене хирĕҫ пемелли пăшалсем—85, пулеметсем—364, автоматсем—85, винтовкăсем—3.911, снарядсем—73.000, минăсем—55.309, патронсем—517.000, танксене хирĕҫ пемелли патронсем—50.000, авиабомбăсем — 14.000, тар—3 тонна, самолетсем—5, планерсем—1, рацисем—19, автомашинăсем —3.091, мотоциклсем—432, велосипедсем—1.415, тракторсемпе тягачсем—33, лавсем—477, лашасем—352, паровозсем—9, вагонсем—264, инженернăй пурлăхсем—13 вагон, йĕлтĕрсем—2 вагон, горючи—3 вагон, йывăҫ материалсем—10 платформа, тĕштырă-фураж—1.340 тонна, продовольстви—1.235 тонна тата ытти ҫар пурлăхĕсем те.

Январĕн 1-мĕшпе 5-мĕш хушшинче ҫапăҫу хирĕнче нимĕҫсен 10 пин ҫын ытла вилсе юлнă.

Ҫав вăхăт хушшинчех Хĕвеланăҫ фронтĕнчи войскăсем халăх пурăнакан 572 пункта нимĕҫ оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хĕрлĕ Ҫарăн ҫĕнтерĕвĕсем хавхалантараҫҫĕ

КАНАШ (**телефонпа, хамăр корреспондентран**). Паттăр Хĕрлĕ Ҫар нимĕҫ оккупанчĕсене хирĕҫ пыракан кĕрешӳре тунă ҫĕнтерӳсем вагонсем юсакан заводри рабочисене питех те пысăк савăнăҫ кӳреҫҫĕ, ĕҫре ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тума, фронта пулăшассине вăйлатма хавхалантараҫҫĕ. Нумаях пулмасть пирĕн паттăр воинсем Керчь тата Феодосия хулисене илни ҫинчен пĕлсен, тимĕрҫĕ цехĕнчи рабочисем пурте пĕр шухăшлă пулса: — Ҫак пысăк ҫĕнтерӳ пире пĕтĕм чун-чĕререн савăнтарать, ҫавна паллă туса татах та тухăҫлăрах та лайăхрах ĕҫлĕпĕр, — терĕҫ.

Тимĕрҫĕ цехĕнчи рабочисен ҫăмахĕ хĕрӳллĕ ĕҫре ҫирĕпленет. Ҫав кун тата ун хыҫҫăнхи кунсенче рабочисем питех те тимлĕн ĕҫлерĕҫ, вĕсем сменăри задание пурте ирттерсе тултараҫҫĕ.

Ҫаплă стахановец-тимĕрҫĕсем Федин, Толубаев, Мальник, молотобоецсем — Тронин, Харченко, Лашманов юлташсем виҫшер норма турĕҫ.

Тимĕрҫĕ цехĕн коллективĕ юлашки кунсенче те пысăк тухăҫлăхпа ĕҫлет. Цехра нормăна тултарса пыман рабочи ҫук. Нумайĕшĕсем кашни кунхи нормăна 2—3-шер хут ирттерсе тултараҫҫĕ.

Вагонсем тăвакан цехри бригадăсем пурте пекех стахановла ĕҫлеҫҫĕ. Слесарь-автоматчиксен Рассказчиковпа Паранин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем, васкавлă заказсене хăвăрт пурнăҫласа пырса, пĕтĕм завод коллективĕ умĕнче чапа тухрĕҫ.

Болтов, Николаев юлташсем ертсе пыракан слесарь-клепальщиксен бригадисем те юлашки вăхăтра кулленхи заданисене 275—285 процент таран тултарса ĕҫлеҫҫĕ.

Т. ИВАНОВ.

Ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕҫе куллен вăйлатса пымалла

ҪĔРПУ. Районри ĕҫҫыннисем Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парас ĕҫе активлăн хутшăнчĕҫ. Виҫĕ-тăватă уйăх хушшинче тăван ҫĕршыва сыхлакан паттăр боецсем валли чылай ăшă тумтирсем панчĕҫ.

Анчах ҫак юлашки вăхăтра ăшă тумтирсем пухас тата хатĕрлес ĕҫ районра чылай сӳрĕкленчĕ. Ку ĕҫе тума ятарласа организациленĕ комисси те саланса кайнă. Комиссин япала йышăнакан склачĕ кунсеренех хупă тăрать. Ку ĕҫе йăвашлатнине пула ăшă япала паракансем те сахалланчĕҫ. Иртнĕ 5 кун хушшинче пĕтĕмпе те «Серп» колхоз ҫеҫ икĕ мăшăр ҫăматă илсе килнĕ.

Сивĕ хĕл пуҫланчĕ ҫеҫ-ха. Тăван ҫĕршыва хăйсен пурнăҫне шеллемесĕр сыхлакан, тăшмана хирĕҫ хаяррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Ҫарăн паттăр боецĕсене ăшă тумтирсем сахал мар кирлĕ. Хамăрăн тăван Хĕрлĕ Ҫарпа паттăр Флота ăшă тумтирсем парса пулăшас ĕҫ кампаниллĕ ĕҫ пулма пултараймасть. Хаяр тăшмана хирĕҫ ҫапăҫма Хĕрлĕ Ҫар боецĕсене куллен тата пур енлĕн пулăшса тăрасси—тылра пурăнакан ĕҫҫыннисен чыслă обязанноҫĕ пулса тăрать.

Г. ПЕТРОВ.

Электричество вăйĕпе ĕҫлеҫҫĕ

КУСЛАВККА. «Коммунист» колхозăн председателĕ Симонов юлташ колхоз итемĕ ҫине комбинатран электричество кĕртсе авăна талăкĕпех электричество вăйĕпе ҫапмалла турĕ. Колхозниксем авăна виҫĕ сменăпа кунĕн-ҫĕрĕн пĕр чарăнмасăр ҫапрĕҫ. Ҫапла вара колхоз авăна районра чи малтан ҫапса пĕтерчĕ.

«Коммунист» колхоз примерĕпе районра татах та 16 колхоз итемсене электрофикацилерĕҫ. Молотилка агрегачĕсене электричество вăйĕпе кунĕн-ҫĕрĕн ĕҫлеттерсе, ҫав колхозсем те авăна ăнăҫлăн ҫапса пуҫтарса кĕчĕҫ.

Т. НИКИТИН.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Калугăшăн çапăçни

Нимĕçсен çарне Мускав патĕнче аркатса тăкас ĕçре Калугăшăн пулса иртнĕ çапăçусем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çар Командованийĕ çак çапăçусен планне малтанах шухăшласа питĕ тĕплĕн хатĕрлесе хунă.

Калугăшăн пулса иртнĕ çапăçусем декабрь уйăхĕн варри тĕлнелле, пирĕн чаçсем тăшмана Тула енче хытă пырса çапнă хыççăн, пуçланнă. Гудерианăн 2-мĕш бронетанковăй армийĕн арканса пĕтнĕ юлашкийĕсем, хăйсен çулĕ çинче танксем, автомашинăсем, орудисем, боеприпассем, вĕçме юрăхлă юсавлă самолетсем те пăраха-пăраха хăварса, васкасах кăнтăр тата кăнтăр-хĕвеланăç еннелле чакса пынă.

Фашистсен командованийĕ хăй поражени тÿснипе килĕшме пултарайман, хирĕç тăмалли малтанах хатĕрлесе хунă вырăнсенче чарăнса, çирĕпленсе lармашкăн çине тăрсах тăрăшнă. Анчах та малашне пулса иртнĕ событисем нимĕçсен хавхаланăвĕ усăсăрах пулнине кăтартса пачĕç. Фашистсем мĕнтери йывăр положение кĕрсе ÿкнипе Гудерианăн пĕр приказĕ те лайăх кăтартса парать. Яланах хаяр пулнă генерал, салтак çине машинăн пайĕ çине пăхнă пек пăхнăскер, сасартăках салтаксем патне «манăн туссем» тесе чĕнÿ çырнă. Чĕнÿн текстне те ĕнтĕ çемçе кăмăллă институтка пекех çепĕç сăмахсемпе çырнă. Ку приказра Гудериан хăйĕн дивизийĕсене текех Тулăна пăвса вĕлерме хушман, салтаксене ăнланулла шухăш-кăмăллă пулма чĕнсе, «хăвăрăн чаçсемпе подразделенисене пăрахса ан кайăр», тесе тилмĕрнĕ.

Хĕрлĕ Çар пырса çапнин вăйне хăйсен ĕнси çинче чăтса курнă нимĕç салтакĕсен шухăш-кăмăлĕсем кунран кун япăхланса пыраççĕ. Вăрçă пуçламăшĕнче нимĕç салтакĕсем фронтран «чаплă çĕнтерÿсем» çинчен калакан çырусем яратчĕç. Халĕ ĕнтĕ нимĕç салтакĕсем хăйсен тылне яракан çырусем ăшĕнче... совет листовкисене те тупма пулать. 519-мĕш полкăн 2-мĕш батальонне панă приказсенчен пĕринче, пирĕн чаçсем тытса илнĕскерĕнче, çапла каланă: «Германие киле ямалли çырусем ăшĕнче тăшманăн листовкисем пулнине темиçе хутчен те асăрханă, çавнашкалах тата салтаксем тăшман пропагандин материалĕсене сарнине те тĕпчесе пĕлнĕ. Çакăн пек тăваканнисене тупсан, питĕ хытă айăплامалла. Хартенек».

Пирĕн задача, нимĕçсене пĕрремĕш хут пырса çапнă хыççăн сывлăш çавăрма памасăр, пĕр-пĕр вырăнта çирĕпленсе ларма памасăр, противник чи сахалтарах кĕтнĕ çĕртен тепĕр хут пырса çапасси пулнă. Тула енчи чаçсем, Хĕрлĕ Çар командованийĕн задачине тăрăх, нимĕçсене кăнтăр еннелле хăвалама чарăнмасăрах, çĕнĕ операцисем тума хатĕрленнĕ.

Противникăн хирĕç тăмалли вăйлă çирĕплетнĕ пункт Тулăран 15 километр аякkарахри Косая Гора вырăн пулнă. Нимĕçсем, çутçанталăк рубежĕсемпе ăста усă курса, кунта дотсемпе дзотсем туса хатĕрленĕ, Косогорски металлурги завочĕн çурчĕсемпе тата завод картишĕпе усă курнă. Косая Гора пункта тÿррĕн тапăнса илни наступленин хăвăртлăхне чылаях чакарнă пулĕччĕ. Çавăнпа та эпир Косая Гора вырăна кăнтăр-хĕвеланăç енчен тавра кайса çавăрса илтĕмĕр. Пирĕн танксен атаки, противник кĕтнĕ пек çурçĕр енчен мар, кăнтăр енчен, урăхла каласан, нимĕçсен тылĕнчен пуçланчĕ. Танксен çапăçăвĕнче нимĕçсен 10 машинине пĕтерсе тăкнă, противникăн ытти машинисем каялла чакмалли çул шыраса сапаланса пĕтнĕ; çав машинăсенчен пĕр пайне пирĕн боецсем тытса илнĕ.

Пирĕн чаçсем тÿррĕн шоссе çулĕ çине тухмасăрах, шоссе айăккипе ерипенех кăнтăр еннелле куçса пырса, тăшмана хĕвеланăç енчен те, хĕвелтухăçĕнчен те тарăн хĕскĕчсемпе хупăрласа илнĕ. Çак хĕскĕчсем Щекино районĕнче декабрĕн 17-мĕшĕнче пĕрлешнĕ. Пирĕн чаçсем Щекино хулине тытса илчĕç, нимĕçсем питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕç.

Эпир хĕскĕч вĕçĕсене Щекино патĕнче пĕрлештерсе, Гудериан группине шоссе çулĕ çинчен çапса кăлартăмăр та, машинăсене юсамалли базăсенчен тата шоссе çулĕсен тĕввинчен уйăртăмăр. Çапла вара Гудериан группировкин кунçулне татса патăмăр, унăн хĕвеланăç тата кăнтăр хĕвеланăç еннелле тармалли çеç тăрса юлчĕ. Вара Гудериан войскисем тарма пуçларĕç.

Щекино патĕнче пулса пыракан çапăçусемпе пĕр вăхăтрах Калуга патĕнчи çапăçусене те хатĕрленнĕ. Ку çапăçусен планне хĕвеланăç фрончĕн командующийĕ арми генералĕ Жуков юлташ туса хатĕрленĕ. Пирĕн кăнтăр еннелле каякан хăшпĕр чаçсене Щекинопăн пулса пыракан çапăçусем вĕçленичченех сасартăк хĕвеланăç еннелле çавăрнă. Сиязов полковникăн чаçĕ Упа ятлă юханшыв хĕррине тухнă та, Тулăран хĕвеланăç тата çурçĕр-хĕвеланăç еннерехри районсене противникран тасатса, ударнăй группăна валли Калуга патне каймалли çула уçса хатĕрленĕ. Часах Хохлов командирăн чаçĕ те хĕвеланăç еннелле кайнă.

Тула районне пехотинецсенчен, кавалеристсенчен, танкистсенчен тата артиллерирен тăракан войскăсен хăвăрт куçса çÿреме пултаракан ударнăй группине пухса тăратнă. Çак группăн задачи ĕнтĕ кĕтмен çĕртен Калугăна тытса илесси пулнă. Группăн хула еннелле куçмалли маршрутне юриех çулсăр районсене суйласа илнĕ: кунта пĕр шоссе çулĕ те, лайăхлатнă пĕр тракт та пулман. Тĕтĕшах юр çуни тата çил-тăмансем тăни ялпа ял хушшинчи çулсене вăрманти евĕрлĕ ансăр сукмаксем туса хунă. Ку çулсемпе машинăсемпе мар, лашасемпе те иртсе çÿреме питĕ йывăр пулнă. Анчах та эпир группа куçса пынине палăртмалла мар тăвас тесе, противникăн разведчикĕсем начар тĕрĕслесе тăракан çула суйласа илтĕмĕр. Ку çул пирĕн Титово—Макарово—Калуга шоссе çулĕ тăрăх мар, Дубно—Ханино—Крутые Верхи—Большие Козлы—Калуга хушшинчи вăрманлă вырăнсем урлă выртнă.

Пирĕн хăвăрт куçакан группăн флангĕсене çурçĕртен те, кăнтăртан та пирĕн чаçсем сыхласа пычĕç. Çурçĕр енчен Сиязов полковник наступлени туса пычĕ. Вăл питĕ анлă фронтра çапăçнă. Тăшманăн уйрăм чаçĕсене çавăрса илсе, хĕстерсе лартса пĕтере-пĕтере тăкнă, хамăрăн автоматчиксен час куçса çÿреме пултаракан групписене мала инçете кăлара-кăлара тăратнă. Сиязов малалла куçса пынишĕн пăшăрхана пуçланă противник пирĕн чаçсем шăпах ĕнтĕ хăйсене çакăнта, Макарово—Калуга хушшинчи шоссе çулĕ çинче, пырса çапма хăтланаççĕ, тесе шутланă пулас, çавăнпа та вăл кунта пирĕн наступление хирĕç тăма хатĕрленнĕ. Кунта фашистсен тулли составлă 137-мĕш пехотнăй дивизине илсе пынă. Тыткăна лекнисем каласа панă тăрăх, дивизин составĕ тулли пулнă, унта 15 пин штык шутланнă.

Кăнтăр тата кăнтăр-хĕвеланăç енчен те пирĕн куçса пыракан группăна хăюллă та татăклă кĕрешекен чаçсем хÿтĕленĕ. Ку тĕлĕшрен пирĕн чаçсем Дубно хулине тытса илни кăтартуллă пулса тăрать.

Ку вăхăтра Дубно хули нимĕçсен тылĕнче, фронт линийĕнчен 25 километр шаларах пулнă. Ăна тытса илмешкĕн автоматчиксен хăвăрт куçса çÿреме пултаракан группине çĕрле лашасемпе тата автомашинăсемпе кăларса янă. Çĕр каçиччен çак çула тухса, ир еннепе пирĕн боецсем Дубно хулине çĕмĕрсе кĕнĕ. Вĕсем хулана пырса кĕнĕ чухне нимĕç офицерĕсем ирхи апат çисе ларнă; салтакĕсем тылри евĕрлĕ вырнаçса каннă. Пирĕн автоматчиксем кунта противникăн пĕр батальонне яхăн пĕтерсе тăкнă. Пирĕн автоматчиксен пĕчĕк группи хулана тытса илнĕ кăна мар, вĕсем пирĕн тĕп вăйсем пырса çитиччен хулана пĕр талăк хушши тытса тăнă. Тăшманăн шалти тылне çакăн пек кĕтмен çĕртен кайса тапăнас меслетпе пирĕн боецсем час-часах усă кураççĕ.

Калугăна илме хатĕрленĕ хăвăрт куçма пултаракан группа вăрттăн малалла пыракан коридорăн икĕ флангĕнче те чылай хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Противник кунта артиллери илсе килнĕ, çапăçăва танксем кĕртсе янă, час-часах контратакăсем тунă. Анчах тăшманăн контратакисене Сиязовпа Хохлов командирсен чаçĕсем питĕ ăста сире-сире аркатса пынă.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн Калугăна илме хатĕрленĕ ударнăй группа талăкне 30-шар километр хăвăртлăхпа малалла куçса пыма пултарчĕ. Çулсăр-мĕнсĕр çакăн пек хăвăртлăхпа куçса пыни ĕнтĕ пирĕн паттăр боецсем мĕн тери чăтăмлине питĕ лайăх кăтартса парать. Декабрĕн 20-мĕш кунĕ вĕçленнĕ тĕле пирĕн войскăсем тăшман йышăнса тăнă территорие тарăн савăл пек татса кĕчĕç. Ку савăлăн шĕвĕр вĕçĕ—Калуга хули, сарлака вĕçĕ—Алексин—Крапивна хулисем пулчĕç. Эпир тăшманăн тылне 10—15 километр сарлакăш тата 60 километр ытла тарăнăш коридорпа шăтарса кĕтĕмĕр.

Нимĕç командованийĕ пирĕн флангсенчи чаçсене хирĕç çапăçăва сыхăну отрячĕсенчен, саперсенчен, артиллери чаçĕсенчи прислугăран васкаса пухнă пĕчĕк группăсем кĕртсе пычĕ. Çакă ĕнтĕ фронтăн çак участокĕнче противникăн резервсем пулманнине, кун çинчен эпир малтанах тĕрĕс шутланине çирĕплетсе пачĕ.

Нимĕç командованийĕ хăйĕн вак групписем усă паманнине кура, ытти участоксенчен шултра чаçсем илсе, вĕсене Калуга патне куçарнă. Ложба районне вĕсем 137-мĕш пехотнăй дивизипе 131-мĕш пехотнăй дивизин чаçĕсене илсе пынă. Мало-Ярославец патĕнчен кунта 260-мĕш пехотнăй дивизине илсе килнĕ. Сухиничирен нимĕçсем Лихвин-Черепеть районне 20-мĕш танковăй дивизин чаçĕсене куçарнă. Нимĕçсен планĕ—пирĕн чаçсене Ханино патĕнче çавăрса илсе хĕстерсе лартасси пулнă.

Сиязовпа Хохлов командирсен чаçĕсем хаяррăн çапăçнине пула, малтан 137-мĕш пехотнăй дивизие сирсе пăрахнă, унтан, пирĕн пулăшу пырса çитнĕ хыççăн, нимĕç войскисен Черепетьри группине те пĕтерсе тăкнă. Сиязовпа Хохлов фашистсен хĕскĕчне пункт хыççăн пункт тата-тата пынă.

Фашистсен 137-мĕш дивизийĕ, йывăр положение кĕрсе ÿкнĕ пирки, васкасах çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăç еннелле чакма пуçланă. Пирĕн чаçсем унăн çулне татма васкарĕç. Хăйсен пехотине çăлса кăларма нимĕçсем танксем янă, анчах та вĕсен танкĕсене пирĕн противотанковăй артиллери тата боец-истребительсен çавтери хăюллă ĕçĕсем путлантарса лартрĕç. 137-мĕш дивизин уйрăм групписем çеç пирĕн ункăна татса тухса çăлăнма пултарчĕç.

Эпир хамăрăн автоматчиксене мала инçете ярса пынипе пĕр вăхăтрах, противника Ока юханшывĕн сулахай çыранĕнче çирĕпленсе ларма памарăмăр. Пирĕн чаçсем противникăн вак групписем патĕнче чарăнса тăмасăрах, вĕсенчен тавра кайса çавăрănса, малалла куçса пычĕç. Противникăн çав вак групписене пирĕн иккĕмĕшпе виççĕмĕш эшелонри боецсем пĕтерсе пычĕç. Нимĕçсен вăрмансемпе çырма-çатрасене тарса пытаннă пĕчĕк групписене пирĕн боецсем халĕ те тыта-тыта пĕтерсе пыраççĕ-ха.

Фашистсен командованийĕ пирĕн войскăсен наступленине Перемышль хули патĕнче тытса чарма тепĕр хут хăтланса пăхрĕ. Кунта нимĕçсем оборона тума естественнăй лайăх рубежсем йышăнса тăнă. Трубников командирăн чаçĕнчи боецсем Перемышле çурçĕр енчен хÿтĕлесе тăракан Хохловское кÿлли урлă каçнă та, çĕрле хулана çĕмĕрсе кĕрсе, нимĕçсене хуларан сапса кăларнă. Çапла ĕнтĕ нимĕçсен оборона линине эпир кунта та татрăмăр.

Пирĕн чаçсем хăвăрт малалла куçса пыни противника вырăс ялĕсемпе салисене вут тивертсе çунтарса яма май паман. Тăрăхнипе урса кайнă тăшман ялсене вут тивертсе çунтармашкăн уйрăм отрядсем тунă. Эпир çав отрядсене пĕтерсе пытăмăр. Çапла, Юрово районĕнче пирĕн боецсем фашистсен 600 çынтан тăракан вут тивертекенсен отрядне аркатса пĕтерсе тăкнă.

Калуга патне вăрттăн куçса пырас план ăнăçлă вĕçленчĕ. Пирĕн чаçсем тăватă кун хушшинче хĕллехи йывăр условисенче, çулсăр-мĕнсĕр 120 километр малалла кайса. Ока хĕррине пырса тухрĕç. Декабрĕн 21-мĕшĕнче ирхине пирĕн чаçсем канмасăрах Калугăна атакăлама пуçларĕç. Фокановпа Борисов командирсен чаçĕсем пĕртен пĕр кĕпере питĕ хăвăрт тытса илчĕç те, Ока урлă каçса Калуга хулине кăнтăр енчен çĕмĕрсе кĕчĕç. Ирхине 8 сехет тĕлнелле вĕсем хулан центрти пайне тытса илчĕç. Нимĕçсем хăйсен резервĕсене илсе пынă хыççăн урамсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Вокзалсемшĕн уйрăмах хаяр çапăçу пулса иртрĕ. Кашни урам, кашни çурт темиçешер хут алăран алла куçрĕ.

Тăшман урнă пекех хирĕç тăрать. Тыткăна лекнисене допрос туса çакна тĕпчесе пĕлнĕ: тин çеç пиçсе тухнă главнокомандующи Гитлер Германи войскисене кирек епле пулсан та Калугăна хăйсен аллинчех тытса тăма приказ панă иккен. Кунта фашистсем ытти участоксенчен пысăк чаçсем илсе килнĕ.

Декабрĕн 23-мĕшĕнче икĕ енчен те çапăçăва танксем кĕрсе каяççĕ. Нимĕçсем хаяр контратакăсем туса, Пучково тата Ромоданово ялĕсене йышăнса илчĕç. Анчах та нимĕçсене кунта пирĕн чаçсем çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Сиязов полковник Ока урлă питĕ хăвăрт каçнă та, Ромодановоран тавра кайса çавăрăнса, Калугăна кăнтăр-хĕвеланăç енчен ярса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн ытти чаçсем, Калугăна çурçĕр-хĕвелтухăç енчен çавăрса илсе, тăшманăн чакмалли çулĕсене пÿлсе лартнă.

Нимĕçсен контратакисене сирсе пăрахса, пирĕн паттăр боецсем çĕнĕрен çĕнĕ атакăсем туса, урам хыççăн урам йышăнса пычĕç.

Хăйсен положенине çăлса хăварас тесе, нимĕçсен командованийĕ пирĕн чаçсене хирĕç питĕ нумай самолетсем ярса тăчĕ. Тĕслĕхрен, декабрĕн 23-мĕшĕнче хулан пирĕн войскăсем йышăнса илнĕ пайĕ çине тăтăшах, кашни 30—40 минута хушшинчех, тăшманăн 10—12-шер самолетран тăракан эшелонĕсем вĕçсе пыра-пыра тапăннă. Анчах пирĕн боецсем пурĕпĕр паттăррăн çапăçса, тăшмана хĕвеланăç еннелле инçерех те инçерех хĕссе пычĕç.

Калугăшăн пулса иртнĕ çапăçусенче те, ытти çапăçусенчи пекех, Хĕрлĕ Çарăн политикăллă органĕсем, коммунистсемпе комсомолецсем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăчĕç. Татăклă çапăçусем пулса пыракан вырăнсенче пур çĕрте те коммунистсемпе комсомолецсем малта пычĕç. Вĕсем хăйсен примерĕпе тата çапăçури паттăрлăхĕпе боецсене хавхалантарса, малалла илсе пычĕç. Вĕсенчен нумайăшĕсем çапăçу хирĕнче хăйсен паттăр пуçĕсене хучĕç, вĕсем чи юлашки минутăччен большевикăн пуринчен малта пулмаллине асран ямарĕç.

Пирĕн хулари вăй тăтăшах ÿссе пынă пирки, нимĕçсен командованин пирĕн ударнăй группăна хулара çавăрса илсе хĕстерсе лартас планĕ пурнăçа кĕрейменĕ. Пирĕн чаçсем тăшмана хытăрах та хытăрах пыра-пыра çапма пуçларĕç, декабрĕн 30-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Калуга хулине пĕтĕмпех йышăнса илчĕ. Калуга çинче халĕ каллех Советсен хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшет.

Генерал-лейтенант И. БОЛДИН.
(«Известия» хаçатран).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç енĕ). **Укерчĕк çинче:** Н-ски чаçри батарейăн оруди расчечĕ фашистсен позицийĕсем çине (Новгород хули районĕнче) пеме хатĕрленет.
А. ГРИБОВСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Фашистсен юнлă ĕçĕсем

КАЛУГА, январĕн 5-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** 7-мĕш шкул Калуга хулинчи чи лайăх шкулсенчен пĕри пулнă. Кунта телейлĕ совет ачисем çĕршерĕн вĕреннĕ, отлично вĕренес тĕлĕшпе мĕнпур школьниксене пример кăтартса пынă.

Калугăна пырса кĕрсен малтанхи куннех фашистсем çак шкула çаратса аркатса тăкнă. Тата темиçе кунтан вĕсем: «Уйрăмăн каласа пĕлтериччен шкулта нимĕнле занятисем те пулмаççĕ», тесе пĕлтернĕ. Гитлеровецсем шкул çуртне гестаповецсене вырнаçтарнă. Кашни кунах фашистсем ку çурта совет çыннисене ушкăнĕ-ушкăнĕпе допрос тума тата тĕрлĕрен мăшкăлласа асаплантарма иле-иле пынă. Çак бандитсен тыткăнне лекнĕ çынсем ку çуртран нихăçан та каялла таврăнман. Хăйсен килĕсенчех юнлă çынсем гитлерла çынсенсем асаплантаракан этемсен ахлатса йынăшнă сассисене илтес мар тесе, çак çурт умĕнчен аякран кăна иртсе кайнă.

Пирĕн чаçсем хĕссе килнĕ пирки çак хулари нимĕç войскисем умне хăрушлăх тухса тăрсан, никамран малтан гестаповецсем кунтан тухса шăвăннă. Вĕсем, хăйсене халăх питĕ хаяррăн тавăрассинчен хăраса, çавтери васкаса тухса тарнипе, хăйсем тунă юнлă та ирсĕр ĕçсен йĕрне те шăлса хăварма ĕлкĕреймен. Сахаровпа Борисов командирсен боецĕсем тул çутăлас умĕн хулана çĕмĕрсе кĕрсе кайнă чухне гестаповецсем тăнă çуртăн картишĕнче халь çеç персе пăрахнă çынсен сивĕнме ĕлкĕреймен кĕлеткисем йăваланса выртнă. Шкул картишĕнче нимĕçсем персе вĕлернĕ совет граждăнĕсен виллисем тулличех пулнă. Эпир вĕсене шутласа пăхрăмăр та 42 çынна çитрĕ.

Акă пирĕн умра старик выртать. Унăн пуç шăммине темĕнле йывăр тимĕр япалапа çапса ватнă. Унпа юнашар—çамрăк хĕрарăм вилли. Бандитсем унăннне икĕ куçне те чиксе шăтарнă. Гитлеровецсем хăйсен тыткăнне лекнĕ çынсене вĕлерес умĕн епле те пулин ытларах асаплантарма тăрăшнă: чĕр çыннах темиçе хутчен пăшалпа пенĕ—малтан хырăмран, унтан пуçран, çурăмран. Пĕр виле çинче эпир темиçе пуля вырăнĕ шутласа кăлартăмăр. Тепĕр çынна фашистсем персе вĕлернĕ хыççăн пуртăпа касса вакласа пĕтернĕ.

Эпир, хамăр чĕрере вĕресе тăракан çилле шăнараймасăр, арестленĕ çынсене тытса усраса допрос тунă пÿлĕме кĕретпĕр. Юнпала вараланса пĕтнĕ сĕтел çинче юнлă резина перчаткăсем, темĕнле тимĕр япаласем выртаççĕ. Сĕтел патĕнче икĕ пуртă йăваланса выртать, унтах касса татнă этем урисемпе аллисем, чĕрĕ çынран тăпăлтарса илнĕ ÿт татăкĕсем. Кунта фашистсем совет граждăнĕсене çеç мар, юнлă Гитлер режимне кăмăлламан нимĕç салтакĕсене те асаплантарса вĕлерсе пурăннă. Сулахайра, чÿрече умĕнче, нимĕç салтакĕн вилли выртать. Унăн питне вĕри шыв сапса пĕçертсе янă, кĕлетки-çурăмне пĕтĕмпех лÿчĕркесе пĕтернĕ.

Гитлер вăрă-хурахĕсен çак ирсĕр ĕçĕсене пурне те хамăр войскăсемпе пĕрле Калугăна чи малтан çитсе кĕнĕ совет кинооператорĕ пленка çине ÿкерсе илчĕ. Вăл ÿкерсе илнĕ кинодокумент этем сăн-сăпатне çухатнă гитлерла бандитсен чăтма çук хăрушă айăпне çирĕплетсе паракан акт пулса тăрать. Этем сăн-сăпатне çухатнă нимĕç вăрă-хурахĕсем пĕтĕм Калугăна фашизмăн хăрушă тĕрми туса хураснăн пулнă. Хула хыçĕнчи садра фашистсем кашни кун темиçе вуншар çынна пере-пере пăрахнă. Эпир фашистсем персе вĕлернĕ вунпилĕк совет çынни йăваланса выртнине куртăмăр.

Калугăра пурăнакан еврейсене фашистсем пурне те кăкăрĕпе çурăмĕсем çинче сарă паллăсем çакса çÿреме хушнă. Еврейсене вĕсем пурне те пĕр çурта хăваласа кĕртнĕ те унтан нииста та кăлармасăр тытса усранă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем выçса вилнĕ. Ытти еврейсене фашистсем çунтарса яма шутланă пулнă, анчах ĕлкĕреймен.

Хулан центрти площадĕнче мирлĕ пурăнакан 4 çыннăн вилли çакăнса тăнă. Вĕсене фашистсем хăйсен сыхăну линине партизансем пырса татса кайнăшăн çакса вĕлернĕ.

Фашистсем хулара пурăнакан халăха перепись туса шута илнĕ. Хĕрсене вĕсем офицерсемпе салтаксем валли уçнă намăс çурчĕсене, больницăсене хăваласа илсе кайнă. Больницăсене янă хĕрсен тăм илнипе шăнса хытăрканă Фрицсене, Ганссене, Адольфсене пăхса пурăнмалла пулнă. Çак намăса тÿсеймесĕр темиçе хĕр хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

Калуга каллех совет хули пулса тăчĕ. Анчах нимĕç оккупанчĕсен ирсĕр ĕçĕсене пирĕн совет çыннисем нихăçан та манас çук. Çав усал ĕçсемшĕн фашистсем пĕтĕмĕшпех ответ тытĕç.

Нимĕçсен аэродромне çĕмĕрсе тăкни

Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух Кăнтăр фрончĕн сывлăшри разведки Таганрог районĕнче тăшманăн аэродромĕ пуррине пĕлнĕ. Вăл нимĕç бомбардировщикĕсен бази пулнă.

Фашистсен йăвине çĕмĕрсе тăкма Красовский юлташăн летчик-истребителĕсене хушнă пулнă. Çав операцие ертсе пырас ĕçе командовани Картузов капитана хушнă.

Çăмăл çунатлă боевой машинăсем çутăличчен нумай малтан вĕçсе тухма хатĕр тăнă. Летчиксем сигнала чунтан хумханса кĕтнĕ. Акă ĕнтĕ çутăлас умĕнхи шупкарах тĕттĕмре моторсем кĕрлесе кайнă: 12 истребитель сывлăша вĕçсе хăпарнă та маршрут картти çинче кăтартнă тĕллев еннелле çул тытнă.

Картузов юлташ тăшман çине вăл кĕтмен енчен—кăнтăр-хĕвелтухăç енчен пырса тапăнма шут тунă.

Акă ĕнтĕ аэродром та курăнать, йывăр «Юнкерссем» патĕнче летчиксем кĕшĕлтетеççĕ. Вĕсем вĕçсе тухма хатĕрленеççĕ курăнать. Хăйĕн самолечĕн çунаттипе сулласа илсе, Картузов капитан атака пуçлама сигнал панă та 400 метр çÿллĕшĕнчен хăйĕн тупписемпе пулемечĕсенчен тăшманăн машинисем çине вут çутарма тытăннă.

Çавтери хăвăрт пырса çапнă, фашистсем ăна-кăна тавçăрса та илеймен— вĕçсе тухма хатĕр тăракан тăватă бомбардировщика вут хыпса та илнĕ.

Зенитнăй пулеметсем урса кайсах пеме тытăннă. Снарядсем çурăлса кайнипе çÿлте тĕтĕм пĕлĕчĕсем пулса тăнă. Анчах нимрен хăраман Картузов хăйĕн ăмăрткайăкĕсене иккĕмĕш хут атакăна ертсе кайнă. Нимĕçсен пуçĕсем çине ирĕлсе кайнă металл çумăрĕ чашлаттарнă, вут хыпса илсе тата икĕ «Юнкерс» сирпĕнсе кайнă. Фашистла çăхансен базине пĕтерсе тăкнипе хăй куçĕпе хăй курса, капитан каялла таврăнма сигнал панă, вара 12 истребителĕ те каялла кайнă.

В. ПОЛТОРАЦКИЙ.
«Известия» хаçатăн спецкорĕ.
Кăнтăр фрончĕ.

Совет Крымĕшĕн пыракан çапăçусем

КАВКАЗ ФРОНЧĔ, январĕн 5-мĕш. **(ТАСС спецкорĕсем).** Кавказ фрончĕпе Хура тинĕс çинчи флотăн чаçĕсем, Крым çурмаутравĕ çинче кĕрешекенскерсем, ĕнер малалла наступлени туса пынă. Халăх пурăнакан татах та темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çапăçусенче хĕçпăшалсемпе транспортсем тытса илнĕ. Пирĕн авиаци противникăн пехотине батальона çити тата автомашинисене икçĕре яхăн пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçура противникăн виççĕ самолетне персе антарнă.

Крыма тинĕс енчен çĕмĕрсе кĕнĕ пирĕн чаçсен ĕçĕсем пит те пысăк хастарлăхпа, паттăрлăхпа пулса пыраççĕ. Çапăçăвăн пĕр участокĕнче нимĕç миномечĕсен батарейи пирĕн чаçсене малалла кайма чарса тăнă. Красноармеецсем Корошенкопа Загорский юлташсем тăшманăн позицийĕсем çине вăрттăн пырса кĕнĕ те, вĕсен батарейи патне çитсе, миномет расчечĕсене гранатăсемпе пĕтерсе тăкнă тата икĕ миномета тытса илнĕ.

Çапăçусем малалла пыраççĕ.

Нимĕçсем „хĕллехи хваттерсене мĕнле куçса пыраççĕ"

Вĕсем вăрмансенчи сукмаксем тăрăх, мăн çулсем тăрăх, ялпа ял хушшинчи çулсем тăрăх, сĕм вăрмансемпе чăтлăх-вĕтлĕх хушшипе тарса пыраççĕ. Хĕллехи хаяр çил вĕсене чĕрене ыраттаракан юрă юрласа ăсатать, пушмак кĕли айĕнче юр кантăк пек качăртатса пырать.

Васкаса тарнă майĕпе пысăк та хура машина кĕпер карлăкĕ çине пырса тăрăннă та радиаторне çÿлелле касăртса чарăнса тăнă. Юнашарах кĕрт ăшĕнчен мотоциклăн майракисем кăнтарса тăраççĕ. Кăшт аяккарах санитари машини шăнса хытса ларнă. Тинкеререх пăхсассăн, сывăхра юр тĕмескисене курма пулать. Санитари машинин шоферĕ каретăна та, аманнисене те пăрахсах кайнă. Нимĕçсем машина ăшĕнчен упаленсе тухнă. Вĕсем йынăшнă, хăйсен таракан юлташĕсене тилмĕрнĕ. Вĕсене пурне те пăр пек сивĕ хĕл хăй аллине илсе пăчăртаса лартнă.

Хăйсен танкĕсемпе вĕсем пирĕн хĕвеланăç еннелле каймалли çула пÿлсе лартма тăрăшрĕç. Акă ĕнтĕ эпир вĕсен ĕмĕтĕнчен мĕн тухнине лайăх куратпăр. Унта та, кунта та нимĕçсен вилĕ танкĕсем тăраççĕ. Танксен гусеницисем юр кĕрчĕсем ăшĕнче лакса ларнă. Сăпса сăнни пек вăрăм кĕпçеллĕ тупăсемпе нимĕçсем пирĕн танксен наступленине чарса лартма шутланă. Çак лутăрканса, таптанса, ванса пĕтнĕ тупăсем кашни ялтах йăваланса выртаççĕ.

Эпир астăватпăр: сентябрь—октябрь уйăхĕсенчех нимĕç салтакĕсем кашни хресченĕн çуртне кĕрсе пăлхатса, чĕпкуç лампăсенчен те краççин ярса пухса илнĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсен горючийĕ татах та сахалтарах, нимĕçсем, тарма çăмăлтарах пултăр тесе, юлашки тумлам краççин-бензин таврашне те пăраха-пăраха хăвараççĕ. Вĕсем чакса пынă çул çинче вуншар, çĕршер пичке горючи сапаланса выртать.

Калинин фронтĕнче кĕрешекен нимĕç войскисем хушшинче фашистсем пăрахса хăваракан ялсене вут тивертсе çунтарса яма уйăрнă уйрăм группăсем пур. Çак группăсене чи пуçсăртарах бандитсене кĕртеççĕ. «Вут рыцарĕсен» ĕçĕсем çинчен каласа панисене итлесен, юн та шăнса хытса ларать. Подорка ялĕнче нимĕçсем 25 çурта вут тивертсе çунтарса янă. Хăйсен пурлăхне çăлма хăтланса пăхнă колхозниксене фашистсем пулеметсенчен персе сапаласа янă. Вĕсем хăйĕн çурчĕ патĕнче ăппаланнă 67 çулти Лаврентьева карчăка пулеметран персе пăрахнă. Пĕрремĕш хут персен карчăк аманнă та чĕркуçленсе ларнă, çак тапхăрта ун çине иккĕмĕш хут пенĕ.

Вĕсем хăйсен аллине лекнĕ пур япаласене те сĕтĕреççĕ. Козлово ялĕнче вĕсем çемьери альбомсене, пукане сене, ача-пăчасен шкула çÿремелли дермантин сумкисене, кĕреçесене, пуртăсене т. ыт. япаласене те илсе тухса кайнă. Анчах та вĕсем пирĕн пурлăха илсе инçетех тарма пултарайман. Пирĕн чаçсем тăшмана хĕсеççĕ, ăна пыра-пыра çапаççĕ, унăн обозĕсене аркатса тăкаççĕ. Нимĕçсем Калинин хулине пăрахса хăварса Старица еннелле чакса пычĕç. Кунта вĕсем çирĕпленсе ларма, пирĕн чаçсен наступленине тытса чарма шутланă. Анчах вĕсен ĕçĕ кунта та ăнăçлă пулмарĕ. Çĕнĕ çулăн пуçламĕшне Калинин фронтĕнчи войскăсем çĕнĕ çĕнтерÿпе— Старица хулине илнипе палăртрĕç. Нимĕçсем хăйсен правилине пăхăнса пырса, вырăссен авалхи хулине вут тивертсе çунтарса яма ĕлкĕрнĕ.

(«Известия» хаçатăн Калинин фронтĕнчи спецкорĕ).

Партизансен ĕçĕ

Паян эпир икĕ партизанпа—Г. тата Д. юлташсемпе, нимĕçсен тылĕнчен тин çеç килсе çитнĕскерсемпе калаçрăмăр. Унта Л. пунктăн гарнизонĕ çине сывлăшран пырса тапăннă пулнă.

Партизансем çав операци çинчен тĕплĕнрех каласа пачĕç.

— Отряд Л. пунктра нимĕçсен штабĕ вырнаçса тăни çинчен хыпар илчĕ. Эпир çав штаба пĕтерсе тăкма шутлатрăмăр.

Мĕн тумаллине пурне те малтанах тĕплĕн шухăшласа хутăмăр. План тăрăх кашни пÿрт патне виççĕ партизанăн пырса тăмалла. Пĕри граната ывăтса ярать, ыттисем нимĕçсене вĕсем тарма тытăнсан пере-пере вĕлереççĕ.

Ял патне пур енчен те пыратпăр. Темиçе часовой, партизансене курса, вĕçĕмсĕр хăраса ÿкнĕ те, мĕн пулни çинчен хăйсен юлташĕсене систерме çĕрех, тарма тытăннă.

Çĕрлехи тĕттĕмре шартлатса çурăлса кайнисем, пăшалсенчен пенисем кĕрлесе кайрĕç. Нимĕçсем çакна пĕртте кĕтмен пулнă. 50 ытла фашиста пĕтерсе тăкрăмăр. Пĕр нимĕç те партизансем хирĕç таврăниччен çăлăнса юлаймарĕ.

1-мĕш рангри техник-интендант Д. РОЗЕН.
Старший лейтенант Б. ТОЛЧИНСКИЙ
ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ.

Икĕ колхоз ăмăртăвĕн итогĕсем

СОВЕТСКОЕ. Лешкас-Асламасри «Коминтерн» колхоз членĕсем 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырас тĕлĕшпе Уйкас-Асламасри «Искра» колхоз членĕсемпе социализмлă ăмăртăва тухнăччĕ. Унтанпа пĕр çулталăк иртрĕ ĕнтĕ. Ăмăртăвăн итогĕсене кăтартма тивĕç.

«Коминтерн» колхоза илсен, çакна куратпăр: кунта ĕçе чăннипех те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕн туса пыраççĕ. Хуçалăхри пур ĕçе те вăхăтра, йĕркеллĕ тăваççĕ. Уйхирсенчен тырпула вăхăтра пуçтарса кĕнĕ. Çуртырррисене пуçтарса кĕртме план тăрăх 7 кун пăхнă пулсан, вĕсем 5 кунта пĕтĕмпех пуçтарса кĕртнĕ. Колхозра кăтартуллăн ĕçлекен çынсем кунран-кунах йышланса пынă. Тырă вырас, кӳрес, çапас ĕçре колхозник Я. Захаров кăтартуллăн ĕçлерĕ. Нормăна яланах 200-шер процент тултарса пырса, вăл бригадăн уйхирти мĕнпур кĕлтисене пĕчченех капана хыврĕ.

Колхоз çĕрулмине уйран вăхăтра пĕр гăккаламасăр кăларса кĕртрĕ. С. Павлова колхозница ку ĕçре нормăна 400-шер процент тултарса ĕçлерĕ. Вăл ĕçшĕн хушса тӳлемелли законпа 20 пăт ытла çĕрулми илчĕ. Кун пек тĕслĕхсем колхозра сахал мар курма пулать.

Колхоз пĕтĕм йышĕпе тăрăшса ĕçлесе, пур ĕçсене те вăхăтра туса çитерчĕ. Государство умĕнчи мĕнпур парăмсене парса татрĕ. 1942 çулшăн государствăна 43 килограмм çу, 639 килограмм ашкакай, 117 çăмарта тата 2 килограмм ытла çăм пачĕ. Колхоз 1941 çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Аванс тăрăх кăна колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограма яхăн тырпул валеçсе панă. П. Кольнов 2.100 килограмм, В. Алексеев—2.400 килограмм ытла тĕштырă илчĕç.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес енĕпе колхоз пур мероприятисене те туса çитерчĕ. Выльăхсене хупма ăшă картасем, витесем турĕ.

Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада итленĕ хыççăн колхоз тата колхозниксем 1941 çулти укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех парса татрĕç, хăшпĕрисем 1942 çулшăн та тӳлерĕç.

Уйкас-Асламасри «Искра» колхоз та 1941 çулта чылай пысăк çитĕнӳсем турĕ. Анчах ăмăрту итогĕсем унăн «Коминтерн» колхозĕнчен начартарах. Кунта тырпула вăхăтра пухса кĕртнĕ пулсан та, авăн çапас ĕçре кая юлса пыраççĕ. Машинăсене юсавлă тытманнине пула, молотилкăсем ĕçленĕ чухне час-часах çĕмĕрĕлсе кайнисем пулчĕç. Колхоз государство умĕнчи хăшпĕр парăмсене те парса татайман-ха. Натуроплатăна 11 центнер парса татман, укçа-тенкĕ парăмне те 1.500 тенке яхăн татман. Авăн çапса пĕтерменнипе пула, колхозниксене аванс йĕркипе тырпул валеçсе парасси чарăнса тăрать.

Икĕ колхоз юнашарах лараççĕ. Ĕç условийĕсем те вĕсен пĕр пекех. Анчах ĕçĕсем пĕр пек мар. Çакă вăл пĕтĕмпех ĕçе организацилеме пĕлменнинчен килет.

Лешкас-Асламасри «Коминтерн» колхоз ăмăртăва тухсанах ĕçре малта пулассишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм коллективĕпе тимлĕн ĕçлеме тытăннă. Колхоз председателĕ И. Димитриев юлташ колхозниксене умра тăракан задачăсене кăтартса парса, ĕçре ертсе пынă. Колхозăн пĕтĕмĕшле пуянлăхĕшĕн колхозниксем пурте тăрăшса ĕçленĕ.

Уйкас-Асламасри «Искра» колхоз та социализмлă ăмăртăва хутшăнса вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешӳ пуçланă. Анчах колхозниксен ĕçлес кăмăлĕпе туртăмне вăхăтра çĕклесе пыман пирки, ĕçе тивĕçлипе организацилемен пирки вăл ăмăртура кая юлнă. Колхоз председателĕ Б. Ильин юлташ ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме тăрăшман. Çакăнтан килнĕ те ĕнтĕ ăмăрту итогĕ пĕр пек пулманни. Пур ĕçе те вăхăтра, лайăх йĕркелесе туса пырсан, колхозниксем пурте пĕр шухăшлăн ĕçлесен, паллах, тунă ĕçĕн итогĕ те савăнтарать.

Е. ИВАНОВ.

Çамрăк патриоткăсем

Завод гудокĕ вăрăммăн кăшкăртса смена пĕтни çинчен пĕлтернĕ. Çамрăк рабочисем Болтовпа Кузнецов, сменăри нормăна ытлашшипех тултарнăскерсем, килсе кайма пуçтарăннă.

— Тусăмсем, тăхтăр-ха,—тенĕ вĕсене чарса мастер Демкин. Эпир васкавлă заказ илтĕмĕр. Хусамăрах ăнланатăр...

— Ăнланатпăр, — тенĕ Болтовпа Кузнецов, — васкавлă заказа васкавлă тумалла.

Çавăнтах вĕсем ĕçе тытăннă. Кузнецов детальсене кăмакара хĕртсе парса тăнă. Болтов вĕсене çапса çирĕплетсе пынă. Икĕ ăстаçă машина пек хăвăрт ĕçленĕ, шăм-шак ывăннине те, вăхăт иртнине те туйман. Вĕсем фронта кирлĕ япалана вăхăтра туса пырассишĕн кĕрешнĕ.

Кĕрешӳ çĕнтерӳпе вĕçленнĕ: 74 сехетре тумалли ĕçе 28 сехетре тунă.

— Умри тĕллеве уççăн курса тунă ĕç яланах пархатарлă пулать, — тет Болтов юлташ.

— Вăл тĕллев — тăшмана çĕнтересси, ирĕклĕ пурнăçа сыхласа хăварасси, — хушса калать Кузнецов, Болтовăн ĕçри тусĕ.

Кузнецов юлташ çамрăк. Вăрçă пуçланиччен çеç ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Вăрçă пуçлансан комсомола кĕнĕ.

— Тăван çĕршывшăн комсомол ретне тăрса ĕçлес терĕм. Кирлĕ пулсан, уншăнах алла хĕçпăшал тытса çапăçăва кĕме хатĕр, — тет вăл.

Кузнецов юлташ чăнах та Гитлер йыткĕтĕвĕсене хирĕç çапăçăва кĕме хатĕр. Вăл гранатăна инçе тата тĕл ывăтать, винтовкăран отлично перет, сывлăшран тапăннинчен сыхланма, малтанхи пулăшу пама лайăх пĕлет. Халĕ всевобуча çӳресе çар ĕçне вĕренет.

Елохин юлташ сверловщик пулса 3—4 уйăх çеç ĕçлет. Çапах та вăл ĕçе çирĕп пĕлет. Пĕр браксăр продукци парать. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна нумаях пулмасть ленинла-сталинла комсомол ретне илнĕ.

Декабрĕн 14-мĕшĕнче, ирхине ĕç пуçланаччен, группкомсорг Андреев юлташ пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă пысăк çĕнтерӳсем çинчен каласа панă.

— Ырă хыпар мана питĕ савăнтарчĕ. Çав кун эпĕ сменăри задание 383 процент тултартăм, — тет Елохин юлташ.

Унтанпа вăл кулленех пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Кашни сменăрах вăтамран 3-шер норма тултарать.

Апорин тата Яковлев юлташсене те юлашки вăхăтра комсомол ретне илнĕ. Вĕсем совет çамрăкĕсен малта пыракан отрядне тăма производствăра тăрăшса ĕçленипе, обществăллă ĕçе активлăн хутшăннипе тивĕçлĕ пулнă. Çĕнĕ çул умĕнхи ăмăртура сменăри заданисене иккĕшĕ те 200—250-шар процент тултарса пынă.

Вагонсем тăвакан цехра пĕр вăхăтра стена хаçачĕн ĕçĕ сӳрĕлсе кайнă пулнă. Ăна чĕртсе яма примерлă комсомолкăна Фроловăна хушнă. Фролова юлташ çак ĕçе пысăк хастарлăхпа тытăннă. Вăл ертсе пынипе стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăма пуçланă. Вăл ертсе пынипе стена хаçачĕ, икĕ номер «Боевой листок» кăларнă. «Боевой листоксене» Мыслина комсомолка редакцилет. Вăлах рабочисене хаçат-журналсем çырăнса илме пулăшать. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа парса тăрать.

ВЛКСМ членĕ Кашицина юлташ — цехри профорганизацин казначейĕ. Вăл хăйĕн ĕçне вăхăтра тата юратса тăвать. Учет ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн ăна 50 тенкĕ парса премиленĕ.

Вагонсем юсакан заводра çакăн пек патриотсем сахал мар. Вĕсем пурте пĕр ĕмĕтпе, пĕр шухăшпа пурăнаççĕ: çĕршывпа фронтшăн пур вăйпа ĕçлемелле, обществăллă пурнăçа активлăн хутшăнмалла.

Т. ИВАНОВ.

Çĕнĕ профессисене вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа хăнăхаççĕ

Сталин юлташ вăрçăн малтанхи кунĕсенчех пĕтĕм ĕççыннисене хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме чĕнсе каларĕ. Çакă вăл заводсемпе фабрикăсенче квалификациллĕ кадрсен хисепне ӳстерес, кашни рабочи хăйĕн производствăллă-техникăллă пĕлĕвне ӳстерсе пырас задачăсене кăларса тăратрĕ. Фабрикăсемпе заводсенчен квалификациллĕ рабочисен пĕр пайĕ фронта тухса кайнă хыççăн çак задача татах та çивĕччĕн тухса тăчĕ.

Çĕмĕрлери древкомбинат руководителĕсем, кадрсене хатĕрлес ĕç производствăра пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, рабочисене тĕрлĕрен професси вĕрентес ĕçе йĕркелерĕç. Ку ĕçре уйрăмах мастерсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса пыраççĕ. Краснов, Шереметьев, Жариков, Рыбакин, Митрофанов юлташсем 126 çынна çĕнĕ профессипе ĕçлеме вĕрентрĕç. Столяр Лаптев юлташ хăйĕн арăмне столяр профессине вĕрентрĕ, халĕ вăл сменăри нормăна 130 процент тултарса ĕçлет. Станочник Сапаров юлташ Беляевăпа Чуранова юлташсене станокпа ĕçлеме вĕрентрĕ, вĕсем те çĕнĕ профессипе ĕçлесе задание 130—170 процент таран тултарса пыраççĕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче заводра двухсотниксен патриотла çĕнĕ движенийĕ сарăлса кайрĕ. Двухсотниксем ĕçре паха примерсем кăтартса, хăйсен çитĕнĕвĕсемпе çамрăк рабочисене çĕнĕ профессисем илме хавхалантараççĕ, вĕсене ĕçре пулăшса пыраççĕ. Фрезеровщик Свиянин юлташ, сменăри нормăна ытлашшипех тултарса пынипе пĕрлех, Дубровина юлташа фрезеровщик профессине вĕрентрĕ. Халĕ Дубровина юлташ нормăна 120 процент тултарса ĕçлет.

Токарьсем Ильин, Корнеев, Афонин юлташсем сменăри нормăна 200—300 процент таран тултарса пыраççĕ. Вĕсем пурте учениксене вĕрентеççĕ, хăйсен ĕç опычĕсемпе паллаштарса, вĕсене кĕске вăхăтрах çĕнĕ профессисемпе ĕçлеме хăнăхтараççĕ.

Сталин юлташăн Октябрь уявĕ 24 çул тултарни çинчен тунă докладне итленĕ хыççăн рабочисемпе работницăсем хушшинче производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçланчĕ. Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшас шухăш-кăмăлпа рабочисем вăхăта шутламасăр ĕçлеме тытăнчĕç.

Юлашки кунсенче древкомбинат васкавлă заказ илчĕ. Çав заказа пурнăçлама пĕр цеха çĕнĕ продукци тăвас ĕçе куçармалла пулнă. Комбинат коллективĕ умне çав цеха хăвăртрах ĕçе ярса, кирлĕ продукцие вăхăтра туса кăларас задача тухса тăчĕ. Цех начальникĕ Биувштейн, парттруппорг Сотников юлташсем, инженерно-технически работниксем тата мĕнпур рабочисем те çав цеха ĕçе ярассишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнчĕç.

Склейщиксемпе справщиксем вăхăтлăха монтажниксен профессине йышăнчĕç. Вĕсем вăхăта шутламасăр, вăйĕсене шеллемесĕр, тăрăшса ĕçлерĕç. Жестянщик Кукушкин юлташ производствăн пĕр участокĕнче икĕ талăк цехран тухмасăр ĕçлерĕ. Тава тивĕçлĕ патриот ĕçе вăхăтра пĕтерчĕ. Цех кирлĕ продукцие туса кăларма пуçласанах коллектив васкавлă заказа пурнăçлама тытăнчĕ. Малтанхи кунах цех коллективĕ пысăк тухăçлăхпа ĕçлесе лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ Склейщик Андреев, оковщик Чечулин юлташсем сменăри нормăна 208-шар процент тултарса ĕçлеççĕ. Рабочисем Рахманин, Стрельцов, Негин, Болдин тата ытти юлташсем те сменăри нормăна 200—245 процент таран тултараççĕ.

Вăтă, кадровăй рабочисем хушшинче çакăн пек производствăллă çĕкленӳ çамрăк рабочисемшĕн патриотла шухăш-кăмăла ӳстерекен тĕслĕх пулса тăчĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем çĕнĕ профессисене хăвăрт хăнăхса, заданисене ытлашшипех тултарса пыма пуçларĕç. Кутырева, Губанихина, Черняева, Наумова тата ытти юлташсем те сборщик профессине вĕренчĕç. Вĕсем çĕнĕ профессипе ĕçлесе, нормăна 150—200 процент таран тултарса пыраççĕ. Герасимовăпа Радостина юлташсем кĕске вăхăтрах столяр-сборщик профессине хăнăхса çитрĕç, нормăна 150-шар процент тултарса пыма пуçларĕç. Сергунинпа Тараканов юлташсем слесарь профессине вĕренчĕç. Халĕ вĕсем питĕ ответлă задание пурнăçланă çĕрте ĕçлеççĕ, кулленхи нормăна 120 — 150 процент таран тултараççĕ. Вăтă рабочий-токарь Веселкин юлташ вĕрентнĕ Елуков токарь та задание 120 процент тултарса пырать.

Пирĕн комбинатра ĕçре патриотла тĕслĕхсем кăтартакан çамрăк рабочисем сахал мар. Хозяйственниксен, профсоюз тата парторганизаци руководителĕсен çамрăк рабочисене производствăра пысăк квалификаци илме куллен пулăшса пымалла.

И. ПОДКЛЕТНОВ.
Çĕмĕрле древкомбиначĕн партбюро секретарĕ.

Мирлĕ шухăш-кăмăлпа пурăнакансем

КУСЛАВККА. ВКП(б) Куславкка райкомĕ иртнĕ кунсенче ялсовет тата колхоз председателĕсемпе канашлу туса ирттерчĕ. Канашлура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ пулчĕ.

Районра государствăна обязательнăй йĕркепе тырă, нахчă-çимĕç парас ĕç епле тăни çинчен канашлура ВКП(б) Куславкка райкомĕн секретарĕ Н. Львов юлташ доклад турĕ.

Районри 20 колхоз тырпул тăратмалли плана таçсанах тултарнă. Нумай колхоз ăна çак кунсенче тултарĕ. Çав хушăрах ытла та кая юлса пыракан колхозсем те пур. Пăрмасри «Новый путь» колхоз тырпул тăратмалли плана 38 процент, Каганович ячĕпе тăракан колхоз — 79 процент, «Чапламма» «Ударник» колхоз — 42, Тĕрлемесри «Коммунар» колхоз 41,7 процент кăна тултарнă. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем кăлăр çес юлнă парăма та парса тата тăрăшмаççĕ. Сăмахран, Пĕршерти Тельман ячĕпе тăракан колхоз тырпул 5 центнер, Юпасри Молотов ячĕпе тăракан колхоз 3 центнер, «Победа» колхоз 15 центнер çес памалли юлнă. Анчах çак колхозсен руководителĕсем çав нумай мар тырра парса татма тăрăшмаççĕ, района калла турттарĕççĕ.

Чашлама, Илябар, Кармăш тата Эльменкасси ялсоветĕсенче хĕрекен единоличниксем хушшинче тырпул хатĕрлес плана тултарас ĕç çителĕксĕр пырать. Ку ялсоветсен исполком председателĕсем çак ĕçе пĕтĕмпех уполнаркомзагăн агенчĕсем çине шаннă, единоличниксем хушшинче ĕçлеме кирлине манса кайнă.

Районра кĕлтесене капана хывас, авăн çапса пĕтерес ĕç вăраха тăсăлать. Пăрмасри «Новый путь» колхозра паянхи куна та 230 гектар çинчи тырпула çапман, Йĕршерти Тельман ячĕпе тăракан, Кармăшри Карл Маркс ячĕпе тăракан, Курочкинăри «Красный Волгарь», Комаровкăри «Большевик» колхозсенче те тырпула çапса пĕтермен.

Кая юлнă колхозсен руководителĕсем тĕрлĕ сăлтавсемпе витĕнме хăтланаççĕ. Анчах çак ĕçсене вăхăтра тума пур колхозсенче те кирлĕ условисем çителĕклĕ пулнă. Çакна палăртма Н. Львов юлташ Паймитри Каганович ячĕпе тăракан колхоза илсе кăтартрĕ. Ку колхозра авăн çапмалли те нумай юлман, [illegible] колхоз государствăна тырпул парса татман.

Тĕрек [illegible] МТС директорĕн заместителĕ Максимов, юлташран: комбайнсем авăн çапнă çĕре мĕнле ĕçлеççĕ? тесе тĕпченĕ ыйтсан—эпĕ юлашки вăхăтра колхозсене [illegible] ответлерĕ. МТС директорĕн çавнашкал [illegible]

Канашлура авăн çапса пĕтермелли тата тырпул поставкине планне пурнăçласа çитермелли график çинчен ăнлантарса пачĕç. Вăл график тăрăх, мĕнпур ĕçсене 1942 çулти январĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлесе çитермелле. Партин пуçламĕш организацийĕсен, ялсоветсен, колхоз правленийĕсен çав срокра пур ĕçсене те туса пĕтерессишĕн кĕрешмелле.

Н. МРАНЬКА.

Малта пыракан ялсовет депутачĕсем

Шкул ачисем пысăк переменăсене тухсан е вĕренӳ кунĕ вĕçленсен, вăл тӳрех ялсовет канцелярине пырать. Вара ун тавра яланах колхозницăсем пухăнаççĕ.

— Акă Иванова юлташ ăнлантарса парĕ, — теççĕ колхозниксем, çамрăк депутата тĕрлĕ ыйтусем парса.

Аслă шкул пĕтернĕ, вăрçă вăхăтĕнче ялта ĕçлеме кăмăл тунă çамрăк хĕр, ялсовет депутачĕ Ф. Иванова юлташ нимĕнле ĕçре те ӳркенсе тăмасть. Вулав çуртĕнче те, ялсовет канцелярийĕнче те Иванова юлташ колхозниксемпе таччăн çыхăнса ĕçлет, вĕсен хушшинче политикăллă ăнлантару ĕçне тăвать.

Вăрçă пуçланиччен те начар мар ĕçленĕ Чурачăк ялсовечĕн депутачĕсем отечественнăй вăрçă пуçлансан пĕтĕм ĕçе фронта пулăшас енĕпе туса пыма тытăнчĕç.

Сăмахран, ялсоветра оборона енĕпе ĕçлеме яланлăх комисси организацилерĕç, ăна М. Калашников депутат ертсе пырать. Çак комиссирех Ф. Иванова юлташ та активлăн ĕçлесе пырать. Вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас тата оборона фондне кулленех ӳстерсе пырас тĕлĕшпе ĕççыннисем хушшинче тăтăшах ăнлантару ĕçне тăвать. Ялсоветри колхозсем оборона фондне 3 тонна ытла тĕштырă панă, колхозниксем хăйсен тупăшĕнчен 28,3 центнер тĕштырă уйăрса панă. Промартель членĕсем хушшинче 47.300 тенкĕ укçа пухнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли колхозниксем 60 тир, 22 килограмм çăм, 26 мăшăр тăла, 25 алшăлли, 18 мăшăр алшиш тата чăлхасем пухса панă.

Ялсовет депутачĕ К. Грошев председатель пулса ертсе пыракан промысла артелĕ 1941 çулти ĕç программине ăнăçлă пурнăçласа оборона валли кирлĕ япаласем пачĕ. Çак вăхăтрах оборонăна пулăшас ĕçе артель хăйĕн членĕсене активлăн хутшăнтарать. Иртнĕ уйăхра икĕ воскресник ирттернĕ. Унта ĕçлесе илнĕ тата артель членĕсене валеççе памалли тупăшран танк тунă çĕре 7000 тенкĕ укçа панă.

К. Грошев юлташ яланлăх бюджет комиссине ертсе пырать. Вăл тăрăшса ĕçленипех ялсовет укçа-тенкĕ пухас плана ăнăçлă пурнăçласа пычĕ. Ялсоветри активистсем ялхуçалăх налогне, страховка тата заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Е. Филиппов, Р. Воробьев, Е. Житова колхозниксем укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен парса татнă тата ытти обязательствăсене срокчен пурнăçланă. Вĕсен ывăлĕсем фронтра тăшмана хирĕç çапăçаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем заем укçине сентябрь уйăхĕнчех тӳлесе татнă. Октябрь уйăхĕнче вара ялсоветри ытти колхозниксем те заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

К. Грошев, ялсовет исполкомĕн председателĕ И. Демьянов тата налог агенчĕ Г. Пегасов юлташсем ĕççыннисем хушшинче куллен ăнлантарулла ĕçе лайăх туса пынине пула укçа-тенкĕ пухас ĕçĕн IV-мĕш кварталти планне ялсовет декабрĕн 10-мĕш тĕлне пĕтĕмпех пурнăçланă.

М. Любимов депутат колхозсен обязательствисене тултарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлесе пычĕ. Халĕ Ленин ячĕпе тăракан колхозра çеç сĕт-çу, натуроплата тӳлесе татмалли юлнă. Ытти обязательствăсене пур колхозсенче те пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Ишлей.

С. ГОРЛАНОВ.

Янăм ялсоветĕнчи агитколлектив

Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота пулăшса пырать. Вăрçă фрончĕсенче те, ĕç фронтĕнче те çĕнтерӳ тăвас ĕçре массăсем хушшинче политикăллă агитацие тĕрĕс тата вăйлăн туса пыни пысăк вырăн йышăнать. Çакна Янăм ялсоветĕнчи агитколлектив лайăх ăнланса илнĕ.

Агитколлектив 16 çынран тăрать. Ăна Янăмри туллимар вăтам шкул директорĕ Е. Смирнов юлташ ертсе пырать. Агитаторсен кашниннех хăйсене çирĕплетсе панă участоксем пур. Çапла вара ялсоветра 3 колхоз, 2 промартель пур пулсан, вĕсенче кашнинчех агитаци ĕçне туса пыракан ответлă агитатор пур. Вăл агитаторсем тавра пĕтĕçсе, участоксенче вуншар çамрăксем, партире тăман большевиксем ĕçлеççĕ.

Агитколлектив колхозсен, артельсен пĕтĕм ĕçĕпе интересленет. Ĕçри кăлтăксене хăвăрт курать, вĕсене тӳрлетме пулăшать. Ялсовет хуçалăхпа политикăллă кампанисене вăхăтра хутшăнса, пысăк пахалăхпа пурнăçласа пырать. Укçа-тенкĕ пухас ĕçĕн 4-мĕш кварталти планне ялсовет январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 100 процентран ирттерсе пурнăçларĕ. «Дружба» артель хăйĕн çулталăкри планне декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнчех тултарнă. Колхозсем çак кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ.

Агитаторсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене сарас ĕçе лайăх туса ирттерчĕç. Лотерея билечĕсене ялсоветри ĕççыннисем пурĕ 2.850 тенкĕлĕх çырăнчĕç, укçине 1735 тенкĕ тӳлерĕç. Ку ĕçре агитаторсем хăйсем пример кăтартрĕç. Е. Смирнов 100 тенкĕлĕх çырăнса илчĕ, Яндушкина, Кулькова 60-шар тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Колхозниксем хушшинче докладсемпе калаçусем ирттернĕ чухне вырăнти паха тĕслĕхсене илсе кăтартни пысăк пулăшу парать. Анчах кăна тума агитаторăн колхозниксен ĕçне пĕлсе, курса тăмалла. Яндушкина агитатор колхозниксем хушшинче тăтăшах ĕçлет, вĕсен ĕçне лайăх пĕлсе тăрать. Вăл нумаях пулмасть «Быстрый» колхозра укçа-тенкĕпе япала лотерейине сарас, укçа пухас тĕлĕшпе доклад турĕ. Ун чухне вăл 65 çулти П. Матвеев колхозник çинчен каласа пачĕ. П. Матвеев колхозникăн 3 ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрса нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçаççĕ, хăй вăл, ватă пулин те, колхозра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Государство умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех вăхăтра пурнăçланă, çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн тăрăшать.

«Быстрый» колхоз 1942 çула государство умĕнчи обязательствăсене пурне те пурнăçланипе кĕтсе илчĕ.

Агитаторсем хăйсен ĕçĕнче Сталин юлташ Октябрь уявĕ кунĕсенче тунă доклада тĕп вырăна хурса ĕçлеççĕ. Çулпуç кăтартнисене колхозниксене анлăн ăнлантарса панă. Çакăнпа пĕрлех агитаторсем ĕççыннисене тăшманран сыхланма вĕрентеççĕ. Агитаторсем—çар ĕçне вĕрентекен инструкторсем. Смирнов юлташ 44 колхозника ПВХО ĕçне вĕрентнĕ. Сергеев юлташ ГСО нормине пама 64 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ.

Агитаторсене кулленхи ĕçре кандидатсен группин руководителĕ Пайманов юлташ яланах пулăшса пырать.

Сĕнтĕр. М. ИСАЕВ.

Сурăкине хатĕрлеме тытăнчĕç

ШĂХАСАН. Паянхи куна районри колхозсем 1.501 гектар çинче юр тытрĕç, уя 1.243 лав тислĕк кăларнă, халĕ вырăнти удобренисене пухаççĕ.

Авăспӳрт Кипечри «Березовка» колхоз сурăкине аван хатĕрленет. Вăрлăхсене 225 центнер сортласа хатĕрленĕ. Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаса тирпейленĕ. Халь колхозниксем кĕл, фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çавăн пекех ку ĕç Вăрман Енĕш ялсоветне кĕрекен «Свобода», «Звезда», Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозсенче те ăнăçлăн пулса пырать.

Анчах сурăкине хатĕрленес ĕçре кая юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Сителти «Победа» колхозра сурăкине хатĕрлеме тытăнман. Сурăкине хатĕрленес тĕлĕшпе Матьшу ялсоветне кĕрекен «Молодой колхозник», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те юлса пыраççĕ.

Малта пыракан колхозсен примерĕпе районри пур колхозсенче те çитес сурăкине хатĕрленес ĕçе халех тытăнмалла.

В. ЯКОВЛЕВ.

Нӳрĕ тырра пăхса усрасси çинчен

Авăн çапас ĕç кăçал вăрăма тăсăлчĕ. Хĕллехи вăхăтра тата кĕрхи çумăрлă кунсенче çапса илнĕ тырă хăйĕнче нӳрĕлĕх нумай тытса тăрать. Нӳрĕ тырра пăхса хĕл каçарма питĕ кансĕр. Апла пулсан та, пирĕн колхозсен 1941 çулта ăнăçлă пулнă тырра лайăх пăхса хĕл каçарма пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Тĕштырă хăйĕнче 16—17 процент таран нӳрĕ тытать пулсан, купара тăнă чухне вăл хăй тĕллĕн ăшăнса хĕрме пултарать, вара унăн шăтас пахалăхĕ те чакать. Хĕллехи сивĕ кунсенче пирĕн умма тепĕр инкек—нӳрĕ тырă сивĕ çанталăкра шăнма пултарасси тухса тăрать. Сивĕ тивнĕ тырă та хăйĕн шăтас пахалăхне çухатать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕ кăтартнă тăрăх, тырăсен нӳрлĕхĕ çакăн пек пулмалла. Пĕрчĕллĕ тырăсен (тулă, ыраш, сĕлĕ, урпа, хуратул, вир, тата ыттисем те) нӳрлĕх 15 процент таран пулмалла. Пăрçа, ясмăк йышши тырăсенче нӳрлĕх 15 процент çурăна çити пулмалла. Асăннă тырăсен нӳрлĕхĕ кăтартнинчен пысăкрах пулсан, вара вĕсене типĕтсе çитерме пур майсемпе те тăрăшмалла. Сушилкăсенче, вĕсем çителĕксĕр пулсан, çын пурăнман, анчах ватă хутса ăшăтма юрăхлă пӳртсенче тырă типĕтес ĕçе организацилемелле. Вăл пӳртсен калăпĕшĕ анлă пулсан, тырра урайне сарса та типĕтмелле. Вырăн çитмест пулсан, тырă хума вăхăтлăха çӳлĕксем тумалла.

Сушилкăсенче, тырă типĕтме майланă пӳртсенче сывлăшăн температури 10 градусран ăшă пулмалла мар, тата сывлăша улăштарса пĕр пек тытса тăма вентиляцисем пулмалла.

Сушилкăсенче тырă хĕрсе каяссинчен асăрханса, ăна 10—15 сантиметр хулăмĕш çеç сарса типĕтмелле тата талăкра 2—3 хут пăтраштарса илес пулать. Çак ĕçе тума колхозсенчи вăрлăх тырă тăвакан бригадăсен бригадирĕсене, тырă типĕтес ĕçе пĕлекен колхозниксене тата агрономсене хушмалла.

Нӳрĕ тырра типĕтнĕ хыççăн, ăна кĕлетсене пуçтарса хураччен, веялка е сортировка витĕр кăларса сивĕтес пулать. Çакна тунă чухне тырă çумкурăкĕсенчен те тасалать, тата çакăнтах тыррăн шултра пĕрчисене уйăрса илме те пулать.

Тыррăн нӳрлĕхне сушилкăсенче типĕтсе кăна мар, тата кĕреçепе сăвăрса, веялка сортировкăсем витĕр кăларса çил вĕртерсе те чакарма пулать. Тырра çӳхереххĕн сарса хурса усрасан та нӳрĕлĕх чакать. Анчах кăна тунă чухне тырра сивĕрен упрас пулать.

Кĕлетсенче нӳрĕ тырă епле тăнине асăрхама термометрсем лартмалла. Вĕсем кăтартакан температурăпа çырса асăрхаса пырас пулать. Куна варринче температура хăпара пуçланă пулсан, тырра хутăштарас, пăтраштарса усăлтарас пулать, купа хулăмăшне çӳхетес пулать. Çакă вăл час-часах çанталăк сасартăк ăшăтсан, е çуркуннехи йĕпе çанталăк вăхăтĕнче пулма пултарать.

Хĕллехи вăхăтра, шартлама сивĕ кунсенче, кĕлетри нӳрĕ тырăсене усрама пĕлес пулать. Хăшпĕр çынсем сивĕ çанталăк тырра пăсмасть теççĕ. Кун пек шутлани тĕрĕс вăл, анчах çакă вăл типĕ тырă тĕлĕшĕпе кăна тĕрĕс. Тырăра нӳрлĕх 12—15 процент çеç пулсан, тепĕр тĕрлĕ каласан, чух типĕ тырă пулсан, вара вăл, паллах, нимĕнле сивĕрен те хăрамасть.

Анчах тырăра нӳрлĕх 17—18 процент пулсан, çав тырă вара 10 градус сивĕрен те хăрать. Нӳрлĕх 20 процента çити пулсан, тырă 10 градус сивĕре шăнса хăйĕн шăтас пахалăхне çухатать. Çавăнпа кĕлетсене хунă нӳрĕ тырра пăсăласран упраса, хытă тĕрĕслесе тăрас пулать. Тĕслĕхрен, нӳрĕ тырă купин варрине лартнă термометр шартлама сивĕ кунсенче 2—3 градус сивĕ кăтартать пулсан тата вăл малалла та сивĕнсе пырасси еннех пăхать пулсан, тырă купи çине брезент, е михĕсем витес пулать, е купан хулăмĕшне пысăклатас пулать.

Çирĕм процент таран нӳрлĕхлĕ тырăсене кĕлетсенче усранă чухне çакна асра тытас пулать. Тырă купин варринче яланах 2—3 градус сивĕ пулмалла. 18—19 процент таран нӳрĕ тырă купи варринче сивĕ 5 градуса çитиччен пулмалла. Çапла вара нӳрĕ тырăсене 1—5 градус сивĕ çĕрте çеç усрани вĕсен шăтас пахалăхне пĕрре те пăсмасть. Анчах сивĕ е ăшă çак çӳлте кăтартнă градуссенчен иртсен, вара нӳрĕ тырă е хĕрме, е шăнма тытăнать. Çакăн çинчен асăрхаттарса, академик Лысенко çапла çырнă:

«Тырăсенче нӳрлĕх норма кăтартнинчен ытларах пулсан, вĕсем сивĕре шăнса шăтас пахалăха çухатма пултараççĕ. Çавăнпа эпир çĕрĕç оргăнĕсене, колхозсемпе совхозсене ун пек тырăсене сивĕ тивтермелле мар çĕрте усрама сĕнетпĕр, тенĕ. Академик Лысенко кăтартăвĕсене пирĕн колхозниксен пурнăçлас пулать.

Кăçал пирĕн колхозсен çуртырррисемпе ыраша тата тĕрлĕ культурăсене иртнĕ çултинчен чылай хут нумайрах акса тумалла. Çавăнпа вăрлăх фончĕсене те ытларах хăварса, вĕсене лайăх пăхса хĕл каçарассишĕн тăрăшмалла. Авăн çапас ĕç çанталăк енчен япăх условисенче пулса пырать, тырăра нӳрĕлĕх нумай. Çакна шута илсе, вăрлăхлăх тырăсене уйрăмах лайăх пăхса хĕл каçармалла. Çакă вăл халĕ питĕ пысăк тата ответлă ĕç пулса тăрать. Тĕмĕнле йывăрлăхсем пулсан та, нӳрĕ тырра типĕтсе шăтас пахалăхне упраса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлемелле. Çакна тусан çеç эпир 1942 çулта татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илĕпĕр.

Профессор Л. ПЕЛЬЦИХ.

„Малалла“ колхозăн строительстви

СĔНТĔР. Малалла колхоз выльăхсене таса та ăшă витесенче усрать. Ăшă витесем пур выльăхсене хупмалăх та пур. Нумаях пулмасть колхоз сыснасем валли пысăк вите туса пĕтерчĕ. Кумсăр пуçне колхоз чăх-чĕп ферми валли те 800 чăх вырнаçмалăх вите турĕ.

В. СЕМЕНОВ.

Иден хăй Мускавра пулни çинчен каласа пани

ЛОНДОН, январĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин ют çĕршывсен ĕçĕсен министрĕ Иден хăй Россия тăрăх хурса çӳрени çинчен радиона тухса каланă. Вăл çапла каласа панă:

«Эпĕ Россияра пĕррехинче 7 çул ĕлĕкрех те пулнăччĕ. Вăл вăхăтра вăрçă тапраннă-çуккĕ, çапах та пирĕншĕн йĕри-тавралăх вăрçă пĕлĕчĕсем капланса килни палăрчĕ. Шăп çав вăхăтра, 1935 çулта, эпĕ Мускавра пулса Сталинпа калаçнăччĕ те ĕнтĕ. Эпĕ ун чухнех Совет Союзĕн интересĕсемпе Англи интересĕсем хушшинче нимĕнле хирĕçӳлĕх те çук тесе шутларăм, халĕ те çапла шутлатăп. Кун çинчен Совет Союзĕпе Англи иккĕшĕ те хăйсен пухăвĕсен çинчен ун чухнех хаçатсенче пичетленсе тухнă коммюникере каласа панăччĕ. Ун чух эпĕ пирĕн государствăсем Совет Союзĕ хушшинче тĕрлĕ уйрăмлăхсем пур пулсан та, пирĕн тĕп задачăсем пĕр пекех тесе шутлаттăм, халĕ те çапла шутлатăп. Эпир тĕнчере мир тытса пырасшăнччĕ. Анчах эпир çав мире сыхласа хăвараймарăмăр; çавăнпа та ĕнтĕ халĕ эпир çав мир тăшманĕсене хирĕç вăрçă ирттеретпĕр. Эпир çак вăрçăра çĕнтерсе тухсан тин тĕнчере çирĕп мир тăвас ĕç çапла хатĕр.

Çапла ĕнтĕ эпĕ тепĕр хут Мускава кайса Сталинпа калаçма тӳр килчĕ.

Королевствăн тинĕс-çар флочĕн карапĕсем пире Çурçĕр Россиăри хамăр çитес пункта лăпкăн тата хăвăртах илсе çитерчĕç. Ку вара тĕлĕнмелле çулçӳрев пулчĕ. Эпир хĕл варринчи тăвăллă тинĕс тăрăх ишсе кайрăмăр. Пĕррехинче карапра моряксем хамăр карап çинче темиçе тонна пăр пурри çинчен каласа пачĕç. Пытармастăп, эпир Европăн çурçĕр енчи аркинчен иртсе Мурманск çыранĕсем çумĕпе ишме тытăнсан, эпĕ питех те хавасланатăм. Тавралăха çурçĕр тăрăхĕнчи уйăхăн шупка çути кăна çутатать, мĕншĕн тесен хĕллехи уйăхсенче кунта хĕвел пачах та тухмасть.

Çыран хĕррине совет салтакĕсен отрядне пĕрлесе тăратнă. Вĕсем пурте питĕ патвар çынсем, хăйсем сурăх тирĕнчен çĕленĕ ăшă тăлăпсем тăхăннă. Сăмах майĕн каласан, Гитлерăн вырăс çарĕсем çинчен калакан çăмахсене пурте пĕлеççĕ. Геббельс çăмахĕсем çинчен пытармасăр пултараççĕ.

Пĕрлехсене тăнă вырăс салтакĕсен флангĕсенче офицерсем тăраççĕ, аллисенче вĕсен Англи флагĕ тата çурлапа мăлатуклă хĕрлĕ ялав. Шап-шурă юр ытамĕнче вĕлкĕшекен ялавсен сарă та йăм-хĕрлĕ тĕсĕ, нимĕн сасăсăр лăпсăртатса çăвакан çемçе юр, шăп кăна тăракан тавралăх,—çаксем пурте совет çĕрĕ çине аннă хыççăнхи чи малтанхи самантсенче ман чĕрене нихăçан манмалла мар кĕрсе вырнаçрĕç.

Пире тĕлĕнмелле ăшă кăмăлпа, çывăх туссене кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕç. Çак туслăхпа ăшă кăмăл пире хамăр курса çӳренĕ вырăнсенче пур çĕрте те яланах нимĕнрен ытларах хаваслантарчĕ.

Самолетпа вĕçсе кайма условисем начар пулнă пирки эпир Мускава поездпа кайрăмăр. Пирĕн çулăн пĕр пайĕ Геббельс хăйĕн сăмахĕпе темиçе хут та татса илнĕ чугунçул линийĕ тăрăх иртрĕ. Хам куçăмпа курнă тăрăх сире çапла калама пултаратăп: Геббельс темиçе хутчен те йăнăшнă. Чугунçул линийĕ тĕрĕс-тĕкĕлех, ниçта та çĕмĕрĕлмен, нимĕн чăрмавсăр яка, лайăх ĕçлет.

Хамăр курса çӳренĕ вăхăтра эпир чи пирвайхи хут вырăс хĕлĕ мĕне пĕлтернине ăнланса илтĕмĕр. Поезд ăнсăртран чарăнса тăнă пире вагонсенчен тухса, çывăрса кайма пуçланă ура-алла çемçетме, 53 градуслă сивĕре хамăр уссисене пăрлантарса курма май пачĕ. Кун пек сивĕре мотора ĕçлеттересси пысăк проблема пулса тăрать. Шăнса вилессинчен сыхланма мĕн тумаллине пĕлмесен, пурнăçа сыхласа хăварма та çăмăлах мар. Çаксене пурне те халĕ нимĕçсем вырăс хĕлĕн условийĕсенче хăйсен ĕнси çинче чăтса ирттереççĕ.

Пирĕн Мускаври посол Стаффорд Криппс та, пире хирĕç тухса илес тесе, çурçĕрелле пайтах килнĕ. Совет Союзĕн Лондонри послĕ Майский пирĕн çул çинче чи лайăх юлташ пулчĕ. Çак посолсем иккĕшĕ те пирĕн делегацие ĕçĕн пур этапĕсенче те питех те хаклă пулăшу парса пычĕç.

Мускава, Гитлер тахçанах туртса илме ĕмĕтленнĕ хулана, эпир каçхине сĕм-çĕрлепе тин çитрĕмĕр. Кунта пире Молотовпа Совет правительствин ытти представителĕсем кăмăллăн хирĕç тухса кĕтсе илчĕç.

Тепĕр кунне эпир Кремльре Сталинпа тата Молотовпа калаçу пуçласа ятăмăр. Пирĕн калаçусем иртнĕ вăрçă хыççăн çак икĕ государство хушшинче политикăллă ыйтусемпе вăрçă ыйтăвĕсем тăрăх пулса иртнĕ мĕнпур калаçусенчен те шаларах кĕрсе кайрĕç.

Пирĕн калаçусем хăйсене хăйсемех икĕ пая уйăрăлчĕç. Малтан эпир хальхи вăрçă ĕçĕсене мĕнле туса пымалли çинчен калаçрăмăр. Кун пирки сире эп ĕнентерсех çапла калатăп: пирĕн коммюникере, вăрçă ĕçĕсене мĕнле туса пырасси пирки Англипе Совет Союзĕ иккĕшĕ те пĕр шухăшлă пулнине палартаççĕ, тесе çырнă пулсан, ку вăл дипломатилле чĕлхе шăпинче мар, чăннипех тĕрĕс сăмах. Эпĕ нимĕн иккĕленмесĕрех калатăп: пирĕн çак енĕ кăна та эпĕ Мускава кайса килнин хакĕнчен темиçе хут та ытларах тăрать. Анчах эпĕ хам çинчен «вăрçă хыççăн мир майне тĕрĕслесе вăрçă хăрушлăхне епле майпа пĕтерессине пирки калаçăва çавăн пек пĕтĕмлетӳсене хуратăп. Эпир мир мĕнле условисенче тăвасси çинчен тата çав мире сыхласа пурăнасси çинчен калаçма майлăччĕ.

Пурпĕрех те хурапа тăрать, Совет правительстви пирĕн правительство пекех тăтăклă решенисем ыйшăнма хатĕр. Çитес уйăхсенче Совет Союзĕн çарĕсем пурте Америкăри хамăр хушшăмăрти пулăшу ыйтăвĕсене пăхса тухнă хыççăн пире пĕлтерчĕç.

Россиăра эпĕ çитиччен çитнĕ те пулчĕ. Çапах та пирĕн тăшмансем вырăнсенче пулчĕç, ман пулăшăва мăнаçлăхпа пĕтĕмĕшпе çапăçатчĕç.

Сулла тата кĕркунне тăршшĕпех совет войскисем тăшмана хăвăрт кашни утăмрах тытса чарса хамăр çĕр тăрăх çапăçса пынă. Анчах халĕ ку шанчăк тăшманăн вăйĕсене çăмăлатарасшăн, хаклама çук пулăшу пачĕ. Германи çар машини халĕ те малтанхи пекех вăйлă. Анчах та ку вăрçăн малтанхи çулĕсенче пĕр-пĕр утăм шăпах тăшман çапса хăтарни çăмăл мар. Германи çарĕ хăйĕн çĕнтерӳçи ятне çухатрĕ. Гитлер хăй тусăн вырăнĕсенче çапăçса тăмалла пулчĕ. Пысăк çапăçусем тата Германи çарĕсем ку енче хăйсен çапăçнă вырăнĕсенчен пĕтĕмпех кайрĕç. Германи çарĕсем çак пекех Гитлерăн шанчăклă çарĕсем пулса тăчĕç. Çакăн пирки Совет Союзĕн çарĕсем тăшмана хирĕç çапăçса пĕтĕмпех ĕçлерĕç, Гитлер тытса илнĕ вырăнсене вăл хăй тытса тăма пултараймарĕ. Пирĕн çар хирĕç çапăçăва каялла чакса пычĕç. Вĕсем, тăшман вăйне пĕтерсе халран ярас тесе, кашни ялшăн, кашни хиршĕн паттăррăн çапăçрĕç.

Халĕ вăрçă урăхла майлă кайса ӳкрĕ. Вырăссен контратакисем контрнаступление куçрĕç. Халĕ нимĕçсене вырăс хĕлĕн хаяр сиввисене тӳссе ирттерме тивет. Гитлер суяна темĕн чухлĕ çаптарсан та, вăл хăй армине хĕллехи условисенче çапăçма хатĕрленмен.

Вырăс войскисен çапăçу хастарлăхĕ калама çук чаплă. Вĕсен шухăш-кăмăлĕсем нихăçанхинчен те çирĕпрех. Вĕсем чакса пыракан тăшмана сывлăш çавăрма памасăр, нимĕн хĕрхенмесĕр çапа-çапа аркатса пыраççĕ.

Çак наступление эпĕ хам та кăштах куртăм. Эпир Мускавпа Ленинград хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх Клин хулине çитиччен, унтан тата кăшт маларах темиçе миля кайрăмăр. Çак çул çинче тăршшĕпех вăрçă йĕрĕсене курма пулать: снарядсем тивнипе арканса пĕтнĕ хула, чĕрпĕкленсе кайнă йывăçсем, пăрахса хăварнă орудисем, ишĕлтерсе пĕтернĕ çуртсем. Çак вăл Гитлерăн «çунтарса янă çĕр политикипе» тесе сыхăнса тăрать. Ку вырăнти çуртсем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех йывăçран. Кирпĕчрен тунă пайĕ вĕсен мĕнпурĕ те трубисем анчах. Çавăн пирки, çуртсем çунса кайсан, вĕсен трубисем пĕлĕтелле кармашса тăлăххăн ларса юлаççĕ. Шартлама сивĕ çанталăклă çĕршывра хыпса çуннă çĕр! Çак политикăн результачĕсем тотальнăй аркату результачĕсенчен те хăрушăрах.

Иртнĕ вăрçăн хĕвеланăç фронтне кăна пĕлекен çынсем кунти ниепле виçсе тухма çук çĕр талккишне тавçăрса илме те пултараяс çук. Эсир вырăс фрончĕн карттине пăхатăр пулсан, юнашар çав масштаблах ӳкернĕ Англин карттине çине пăхни питĕ усăллă пулмалла.

Германи армине хăвăрт та таçта çитмех хăвалаççĕ. Сăмахран, эпир Клин хулине эрне кун кăнтăрлапа çитрĕмĕр. Çав эрнерех тунтикун хулара пысăк çапăçусемех пыратчĕç-ха. Эпир хуларан 6—7 миля уйăрăлса кайрăмăр, çапах та нимĕçсем патне 20 мильăран ытла çывхараймарăмăр та пулмалла. Гитлер яланах маневрлă вăрçа юратнă, халĕ ăна çавăн пек вăрçă кăтартаççĕ те ĕнтĕ».

Малалла Иден тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем çинчен каласа панă. Вĕсене вăл хăй куçĕпе курнă.

«Вĕсем çамрăк, ачасем кăна теме пулать. Çапах та вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем кĕçĕн офицер чинĕнче тăраççĕ. Вĕсен çи-пуçĕсем питĕ начар, çавăн пирки вĕсем сивĕпе питĕ хытă аптăраççĕ. Нимĕç салтакĕсен тумтирĕсене те, аттипушмакĕсене те, тумтир тӳммийĕсене те питĕ начар материалран тунă. Тыткăна лекнĕ салтаксен пĕрин те перчаткăсем çук». Тыткăнри салтаксем Идена хăйсем каласа панă тăрăх, вĕсен çипуçĕ пĕтĕм Германи салтакĕсен çипуçĕпе пĕрешкелех. Иден, ку сăмахсем тĕрĕссине ĕненетĕп, тесе пĕлтернĕ.

Малалла Иден çапла каланă:

— Астăвăр, вырăс хĕлĕн шартлама сиввисем умра тăраççĕ-ха. Ун чух вара вырăссемшĕн—çĕнтерӳ пуласса, Германишĕн—йывăрлăхсемпе асапсем пуласса шанса тăма сăлтав пуррине хăвăрах курăр,—тенĕ.

Радио тăрăх Иден малалла Россиăра танксемпе самолетсем тăвас ĕç халĕ каллех тĕлĕнмелле хăвартлăхсемпе пыни çинчен каланă.—«Эпĕ хамăр пулăшу пани çинчен те хавасланах каласа паратăп,—тенĕ вăл. — Англирен илсе пынă машинăсем кашниех çапăçусенче тĕрĕсленеççĕ. Вĕсем хăйсен пахалăхне кăтартрĕç ĕнтĕ. Англипе Америка заводĕсем туса кăларакан продукципе кунта, вырăс çĕршывĕнчи çапăçу хирĕсенче, питех те лайăх усă кураççĕ. Эсир кун пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленсе тăма тивĕçлĕ мар».

Юлашкинчен Иден çапла каланă: «Сталинпа Молотов патĕнче пулни тата вĕсемпе калаçни мана çапла калама шанчăк парать: пирĕн государствăпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе политика тĕлĕшĕнчен çывăх та таччăн сыхăнса ĕçлесси чăннипех пурнăçланма пултарать, пурнăçланмалла та. Эпир хамăр хушăмăрта уйрăмлăхсем пуррине шута илмесĕр тăма пултараймастпăр, анчах та пирĕн пĕрне-пĕри шансах çитерейменнин юлашкийĕсенчен тасалмалла. Уйрăмлăхсем пирĕн — государствăна тытса пырас формăсем пĕр маррине, анчах та ку уйрăмлăх пире хамăр пĕрле туса пыракан кĕрешӳре пĕр-пĕринчен уйăрса яма пултарĕ тенипе нихăçан та килĕшместĕп. Ют çĕршывсем тĕлĕшпе пулса пыракан политикăра пĕр-пĕр нацин хăйĕн государство управлени форми мар, вăл наци пĕтĕм государствăсем хушшинче хăйне-хăй мĕнле тыткалани тĕп вырăн йышăнса тăрать. Гитлер хăйĕн çĕршывĕнче нацист пулни мар инкек кӳрет тĕнчене, вăл пĕр хăй çĕршывĕпе кăна çырлахса тăманни, никама хĕрхенми, нимĕнпе тăранми агрессор пулса тăни, хăйĕн çăткăнлăхне тăрантарас шутпа пĕтĕм тĕнчипех пуç пулма шутлани, никама пăхăнса тăман ирĕклĕ çĕршывсене чăтма пултарайманни,—çакă ĕнтĕ инкек кӳрет пĕтĕм тĕнчене. Гитлера пĕтериччен, Германин çар вăйне пĕтерсе тăкиччен пĕр наци те хăйне хăй хăрушсăрлăхра тесе шутлама пултараймасть. Россиăпа пирĕн позици пачах та кун пек мар, кун пек позицие хирĕç. Россиăпа Англи çĕршывĕсем иккĕшĕ те Германие пĕтĕмĕшпех çапса аркатса, ăна ытти государствăсене хирĕç урăх нихăçан та вăрçă пуçлама май памалла мар тăвассишĕн мĕнпур вăй-халран кĕрешме хатĕрех тăраççĕ. Совет Союзĕпе Англи иккĕшĕ те—çирĕп мир тăвассишĕн. Çак пĕр пек тĕллевсене пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн пĕр-пĕринпе пĕрлешсе ĕçлемелле, вăрçăран çĕнтерсе тухса мир туса хумалла.

Мускаври калаçусем чĕрене чĕррĕн кĕрсе вырнаçса юлнă тăрăх шутласа эпĕ çапла калатăп: Эпир çĕнтерӳ те тăвăпăр, мир те тăвăпăр!».

Хĕрлĕ Çар резервĕсене вырăс воинĕсен чаплă примерĕ çинче вĕрентсе пырар

«Эсир туса пыракан вăрçă ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçă, тĕрĕслĕхлĕ вăрçă пулса тăрать. Çак вăрçăра сире пирĕн ĕлĕкхи аслă тăвансен—Александр Невскин, Дмитрий Донскойăн, Козьма Мининăн, Димитрий Пожарскин, Александр Суворовăн, Михаил Кутузовăн паттăр сăнарĕсем хавхалантарса пычăр. Сире аслă Ленинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ çул кăтартса пытăр». (Сталин).

Аслă çулпуçăн, пирĕн вăхăтри чаплă полководец Сталин юлташăн чĕнĕвĕ пире пурне те çĕнĕ çĕнтерӳсем тума, нимĕç фашисчĕсене хирĕç хаярран кĕрешсе çав тискер кайăксене пĕтерсе пыма хавхалантарать.

Пирĕн мухтавлă боецсен, командирсен, комиссарсен тата партизансен характерлă енĕсем—паттăрлăхпа хастарлăх, хăюлăхпа пуçарулăх пулса тăраççĕ. Ахальрен мар вĕсем нимĕç фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳре хăйсен халăхĕн историне тем чухлĕ паха страницăсем çырса хучĕç. Хĕрлĕ Çарăн боевой резервĕсене вĕрентсе хатĕрленĕ чухне çак паттăрла кĕрешĕвĕн тĕслĕхĕсене, пирĕн ĕлĕкхи аслă тăвансен опычĕсемпе пултарулăхĕсене, граждăн вăрçи геройĕсен манăçми ĕçĕсене, аслă Сталин юлташăн çар искусствинчи опытне яланах асра тытса ĕçлемелле.

Ку тĕлĕшпе çар пурнăçĕнчен илсе çырнă илемлĕ литература питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл пире вырăс халăхĕн иртнĕ паттăр кунçулĕпе тăван çĕршыври халăхсен ĕмĕртенпе ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвĕпе паллаштарать. Эпир пĕтĕмĕшпе çар вĕренĕвĕ тата призыв умĕнхи çар хатĕрлевĕ витĕр тухакансене çакăн пек кĕнекесем вулама сĕнетпĕр: Д. Фурмановăн «Чапаев», Перvenцевăн «Кочубей», Серафимовичăн «Железный поток», Новиков-Прибойăн «Цусима», Ю. Корольковăн «Комсомольцы на фронте», Зенинăн «Нахимов», Сергеев-Ценскин «Севастопольская страда», С. Борисовăн «М. В. Фрунзе», С. Вашенцевăн «На штурм», Е. Крекшинпа Севрукăн «Саперы идут впереди», С. Хайкинăн «Мастер боевой разведки», «В тылу у врага». В. Ставскин «Бесстрашие и находчивость», «В боях за родину», «Молниеносный удар», Иван Франкон «Борислав смеется», А. Толстойăн «Петр Первый» А. Чапыгинăн «Степан Разин», Сергей Бородинăн (Амир Саргиджанăн) «Дмитрий Донской», Шкловскин «Минин и Пожарский», Лурьен «Александр Невский», Альшицăн «Нашествие Батыя», С. Калининăн «Суворов», «Очерки из жизни и деятельности великого русского полководца», К. Осиповăн «Суворов», Д. Д. Давыдовăн «Военные записки», кĕнекисене тата «Бои на Карельском перешейке», «Крах Германской оккупации на Украине», «Бои в Финляндии» кĕнекесене, С. Борисовăн «Кутузов», Шмерлингăн «Котовский», К. Левинăн «Русские солдаты», Д. Петровскин «Повесть о полках Богунском и Таращанском», А. Фадеевăн «Партизанские повести», А. Толстойăн «Хлеб», В. Ивановăн «Пархоменко», С. Голубевăн «Солдатская слава», Л. Толстойăн «Война и мир» романĕсене, «Герои Хасана» сборнике, К. Ворошиловăн «Сталин и Красная Армия», Л. Канторовичăн «Пограничники», «Полковник Коршунов» тата ыттисене те вуласа тухма сĕнетпĕр.

Çакăнта асăннă кĕнекесене облаçсенчи, хуласенчи тата районсенчи библиотекăсен çар ĕçне вĕренекенсем хушшинче çине тăрсах сармалла, кĕнекесенчи паллă вырăнсемпе паллаштармалла, вулакансен конференцийĕсене туса ирттерсе, уйрăм кĕнекесене сӳтсе-явмалла, писательсемпе вулакансен тĕлпулăвĕсене организацилемелле тата ытти çавăн пек майсемпе кĕнеке вулакансен шутне ӳстерсе пымалла. Çавăн пекех ку тĕлĕшпе тăван чĕлхепе литература преподавателĕсем те пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ.

Шкулсенче вĕренекен çамрăксен всевобуч пункчĕсене шефа илмелле. Кунта вĕсем пĕтĕмĕшле çар ĕçне вĕренекенсем хушшинче кĕнекесем вуласа пама, мĕн вуланине каласа кăтартма пултараççĕ. Çар ĕçне вĕренекенсене пирĕн авалхи тăвансен геройла образĕсемпе, фашизма хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн геройĕсемпе паллаштарнă чухне командирсемпе тата политработниксемпе таччăн çыхăнса ĕçлемелле. Кĕскен каласан, пĕтĕмĕшле çар ĕçне вĕренекенсене, Сталин юлташ кăтартса панă пек, нимĕç захватчикĕсен çар хăватне çапса аркатма, пирĕн çĕршыв çине, ăна чуралантарас шутпа, сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕç оккупанчĕсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкма тивĕçлипе вĕрентсе хатĕрлемелле.

Полковник А. БУСЯЦКИЙ.

Артель фронтшăн пысăк ĕçсем тăвать

Канашри инвалидсен «Красный воин» артелĕн коллективĕ 1941 çулти декабрĕн 25-мĕш тĕлне çулталăк планне ытлашшипех тултарса, планран ирттерсе 430 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Сталин юлташ чĕнĕвĕ çине ответлесе, артель коллективĕ производствăри пур ĕçе те фронт интересĕсене пăхăнтарса туса пырать. Çĕвĕ çĕлекен цех пĕтĕмпех васкавлă заказсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлет. Васкавлă заказа вăл декабрĕн 25-мĕш тĕлне ытлашшипех пурнăçларĕ.

Пĕветекен цех хăйĕн ĕçне çĕнĕлле организацилерĕ. Производствăра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем нумайĕшĕсем кулленхи ĕç нормине 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ.

Фотографире ĕçлекен Лебедев, Лаптев юлташсем кулленхи задание 350 процент таран тултарса пыраççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехра та Шакина, Москвина, Петухова тата ытти юлташсем те сменăри нормăна 130—200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Плана тултарса пынипе пĕрлех артель коллективĕ Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе те активлăн хутшăнать. 1941 çулти декабрĕн 25-мĕш тĕлне артельри рабочисемпе работницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 301 япала янă. Çав шутра 12 мăшăр çăматă, ваткăпа çĕленĕ 68 ăшă шаровар, ваткăпа çĕленĕ 72 ăшă пиншак, алшишсемпе чăлхасем тата ытти те.

Кунсăр пуçне вĕсем оборона фондне 7.260 тенкĕ укçа, 8.935 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 4.380 тенкĕ укçа, 1945 тенкĕ заем облигацийĕсем хывнă.

КОРЧАГИН.

Фронта пулăшассине вăйлатаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри ĕççыннисем пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен урнă йыткĕтĕвĕсене каялла хăвалани çинчен пĕлтернисене чĕререн тавтуса кĕтсе илеççĕ. Чылай колхозсенче фронта пулăшас ĕçе вăйлатрĕç.

Мăн Пакăшри «Красный партизан» колхоз членĕсем оборона фондне татах 2 сурăх, 24 килограмм çăм, 8 тир парачĕç. Николаевскинчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕ çул ячĕпе 1 центнер тулă çăнăхĕ, 70 килограмм аш-какай, 16 килограмм сар çу т. ыт. продуктсене те ярса пачĕç. Кун пек тĕслĕхсем районри чылай колхозсенче курма пулать. Вĕсем пурте Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсем патне çĕнĕрен те çĕнĕ парнесем ярса тăраççĕ.

Е. ИВАНОВ.

Заем облигацийĕсене оборона фондне параççĕ

ЭЛĔК. Заем облигацийĕсене оборона фондне парасси районри служащисемпе колхозниксем хушшинче сарăлсах пырать. Январĕн 1-мĕш тĕлне районри ĕççыннисем заем облигацийĕсене 66040 тенкĕлĕх оборона фондне хывнă.

Элĕк вăтам шкулĕнчи учительсен коллективĕ—5530 тенкĕлĕх, МТС коллективĕ—9520 тенкĕлĕх, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ М. С. Кузьмин юлташ хăй—2285 тенкĕлĕх, райсовет исполкомĕн председателĕ Т. Ф. Филимонов юлташ—880 тенкĕлĕх, М. Абреков юлташ—500 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне панă.

Колхозсемпе колхозниксем те заем облигацийĕсене перекет кассине хываççĕ. Сормпуç Шĕмшешри «Триер» колхоз 2500 тенкĕлĕх хывнă. Томкăри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ 65 çулти З. Михеев юлташ хăйĕн виçĕ ывăлне Хĕрлĕ Çара ăсатнă.

— Манăн ывăлсем фашистсен урса кайнă йыттисене хирĕç çапăçаççĕ. Тăван çĕршыва тата унăн ирĕкне сыхлакансене пулăшма эпĕ 90 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне паратăм,—тет вăл.

М. Я.

„Цивильстрой“ колхоз пуçарăвĕпе

ШАХАСАН. Çĕнĕ Мами ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем Çĕрпӳ районĕнчи Туçи ялсоветне кĕрекен «Цивильстрой» колхоз пуçарăвне ырлаççĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Çар валли пĕр ĕне самăртса пама пулчĕ. Кунсăр пуçне кашни колхозник хăйĕн килĕнче пĕрер чăх тăрантарса пама тытăнчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те Хĕрлĕ Çар валли пĕр ĕне çитĕнтерсе самăртаççĕ. Çавăн пекех Тури Сурăм ялсоветне кĕрекен «Заря» колхоз членĕсем те, «Цивильстрой» колхозри колхозниксен чĕнĕвне ырласа, Хĕрлĕ Çар валли 5 центнер аш-какай, 1 тонна сĕлĕ улăмĕ, 10 центнер тырă т. ыт. те пама пулчĕç.

«Цивильстрой» колхозри колхозниксен пуçарăвне районри ытти колхозсенче те сӳтсе-яваççĕ.

В. Я.

„Спортинвентарь“ фабрикинче

Вăрмарти «Спортинвентарь» фабрикинче ĕçлекен хĕрарăмсем машиннăй цехра питех те сложнăй станоксемпе пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме вĕренчĕç. Сăмахран, фрезеровщица В. Алексеева, А. Абрамова юлташсем кулленхи нормăна 130-шар процент тултарса пыраççĕ. Вĕсем мастерсем хушнă ĕçе яланах вăхăтра та тĕрĕс пурнăçлаççĕ. Сложнăй машинăсем çинче арçынсемпе тан ĕçлеççĕ. Хăйсен ĕçри пултарулăхĕпе ыттисене пример кăтартаççĕ. Çавăн пек ĕçлекен рабочисемпе работницăсем машиннăй цехра татах та нумай.

Сĕтел-пукансем тăвакан цехра полировщица пулса ĕçлекен Терентьева, Кириллова, Иванова юлташсем кулленхи ĕç нормине 280-шар процент, Димитриев юлташ 362 процент тултарса ĕçлеççĕ. Димитриев юлташ темиçе тĕрлĕ профессипе те ĕçлеме пултарать. Кирек мĕнле ĕçе ярсан та Димитриев юлташ ăна вăхăтра пурнăçлать.

Анчах сĕтел-пукансем тăвакан цехра стахановла движение ертсе пыракан çук. Рабочисем хушшинче рационализаторла сĕнӳсем пухас ĕçе пуçарса яман. Цехри руководительсем пурте коммунистсем, анчах вĕсем цеха йĕркеллĕ ĕçлесе пыма вăхăтра тата çителĕклĕ таран материал парса тăрассишĕн тăрăшмаççĕ.

Укçа-тенке перекетлес тĕлĕшпе фабрика администрацийĕ çителĕклĕ ĕçлеменни палăрать. Пĕр отделенире виçĕ çын ĕçленĕшĕн пĕр мастер тытса усраççĕ. Ĕçе пĕлсе, лайăх организацилени курăнмасть. Пĕр çĕрте çынсем ĕç çителĕклĕ маррипе ахаль çӳреççĕ, тепĕр çĕрте рабочисем çитмеççĕ. Цехри çак çитменлĕхсене фабрика директорĕ курмасть. Çитменлĕхсене пĕтерсе ĕçе большевикла организацилени кирлĕ.

ЛАВРЕНТЬЕВ.

Лотерея билечĕсемшĕн укçа тӳлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ямапак ялсоветне кĕрекен «Красное Сормово» колхоз членĕсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 3000 тенкĕлĕх сыранса илнĕ. Вăл шутран 2800 тенкĕ укçине пухса панă та ĕнтĕ. Ватă колхозниксем 60 çулти К. Прокопьевпа П. Фомин юлташсем лотерея билечĕсене 40-шер тенкĕлĕх çыранса, укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕç. Нумай колхозниксем 20—30-шар тенкĕлĕх çыранса, укçине çавăнтах тӳлерĕç.

М. ГЕРАСИМОВ.

* * *

КӲКЕÇ. Платкари «Хĕрлĕ ялав» колхоз членĕсем, укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 1440 тенкĕлĕх çыранса, 540 тенкĕ укçине çийĕнчех тӳлерĕç. Парти членĕ В. Мышкин юлташ 200 тенкĕлĕх çыранса, 50 тенкине тӳлерĕ. Ун примерĕпе лотерея билечĕсене И. Шильдяков юлташ 200 тенкĕлĕх, А. Тимков—150 тенкĕлĕх, П. Сапожников—100 тенкĕлĕх çыранса илчĕç. 62 çулти О. Алексеева юлташ 30 тенкĕлĕх çыранса, укçине те тӳленĕ. 63 çулти Е. Иванова юлташ та лотерея билечĕсене 30 тенкĕлĕх çыранса илчĕ.

Н. МЫШКИН.

Государствăна тырă сутаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефон тăрăх). Районри колхозсемпе колхозниксем çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Халĕ районра колхозсем тата колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине кооператив урлă государствăна сутас ĕç пырать. Тосаево ялсоветĕнчи «Шимар» тата «Четай» колхозсем государствăна 40-шер центнер тырă сутаççĕ. «Шимар» колхоз председателĕ Григорьев юлташ государствăна 6 пăт тырă, К. Яковлев, П. Антонов, И. Михайлов колхозниксем 5-шер пăт тырă сутаççĕ.

Албахтинăри «Партизан» колхоз председателĕ Алексеев юлташ государствăна 12 пăт тырă, çав колхозри ферма заведующийĕ В. Васильев 12 пăт, 61 çулти колхозница Корнилова юлташ 6 пăт тырă сутаççĕ. Колхозсемпе колхозниксем хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутас ĕç вăйлансах пырать.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри колхозсем государствăна тырă сутма пуçларĕç. «Двигатель революции» колхоз çак кунсенче государствăна 220 центнер тырă сутрĕ. Çавăн пекех Шмидт, Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна 100—130-шар центнер тĕштырă сутрĕç.

Колхозниксем те хăйсен ытлашши тыррине государствăна сутаççĕ. «Двигатель революции» колхоз членĕсем А. Максимов 2 пăт, П. Максимов тата О. Петухова колхозниксем государствăна пĕрер пăт тырă сутрĕç.

П. АРХИПОВ.

Çар ĕçне тăрăшса вĕренетпĕр

Эпир Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕнчи 9—10-мĕш классенче вĕренекенсем çар ĕçне тăрăшса вĕренме тытăнтăмăр.

Çар ĕçне кашни эрнере 7 сехет хушши вĕренетпĕр. Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма тимлĕн вĕрентĕмĕр.

Халĕ занятисем нумай чухне тулта пулса иртеççĕ. Противогазпа усă курма, винтовкăран тĕл пеме, тăшмана тĕрлĕ майсемпе пĕтерсе пыма хăнăхатпăр. Нумаях пулмасть противогаз тăхăнсаултă çухрăмлă поход туса ирттертĕмĕр.

Ф. ЯНДУШКИН.

Зоотехника кружокĕ организацилерĕç

ВĂРНАР. Мăн Турханти Ленин ячĕпе тăракан колхозра зоотехник Тришин юлташ зоотехника кружокĕ организацилерĕ. Кружок занятийĕ эрнере пĕрре пулса иртет. Унта фермăсенче ĕçлекенсем пурĕ 15 çын çӳреççĕ.

Пирвайхи занятире Тришин юлташ вырăхсене пăхса самăртасси çинчен, фронта ытларах аш-какай парса пулăшасси çинчен ăнлантарса пачĕ.

Н. ЗАХАРОВ.

—О—

Пĕлтерӳ

Паян, январĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпункт залĕнче (Центральнăй библиотека çуртĕнче) агитаторсемпе агитколлектив руководителĕсем тата беседчиксем валли доклад пулать. Докладăн теми: «Хальхи вăхăтри вăрçăра авиаци мĕнле вырăн йышăнса тăни тата вăл çĕр çинчи войскăсемпе сыхăнса çапăçни».

Докладчикĕ—Совет Союзĕн Геройĕ майор ШИНКАРЕНКО.

ВКП(б) Хула Комитечĕн агитпункчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 314 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.